Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ЙАНВАР
16
ВЫРСАРНИКУН
13 (4826) -мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

20-мĕш çул тухат ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйĕн 0—23

ССР Сойузĕн 1-ш созыври Аслă Совечĕн Пĕрремĕш Çеççийĕ

СОВЕТ ПАРЛАМЕНЧĔН ЙАЛАНЛĂХ КОМИÇÇИСЕМ

ССР Сойуз Аслă Совечĕн палатисем—Сойуз Совечĕпе Националънăçсен Совечĕ ĕçлесе тăракан комиççисем суйларĕç: Саккунсем хатĕрлекен Комиççисем, Буджет Комиççисем, Йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççисем. Çак Комиççисене туни политикă йенчен калама çук пысăк, паха вырăн йышăнса тăрат. Тĕлĕнмели çук, икĕ палатинче те суйлавсем политикăлă пысăк çĕкленӳпе иртрĕç, суйлавсем вăхăтĕнче хĕрӳлĕн тухса каларĕç. Çак ĕçре Аслă Советăн болъшевикла пĕрлĕхĕ тепĕр хут палăрчĕ, вăл социалисăм ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшни палăрчĕ.

Саккунсем хатĕрлекен Комиççисене суйлани социалисăмлă государствăра саккунпа саккунлăха мĕнле пысăк вырăна хунине кăтартса пачĕ. ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă докладра Сталин йулташ 32-мĕш статйа калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртрĕ, вăл статйара: „ССР Сойузĕн саккун кăларакан влаçне пĕртенпĕр ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ анчах пурнăçа кĕртсе тăрат“—тесе çырнă. Сталин йулташ çапла каларĕ:

„Пĕр мĕнле те пулин оргăн мар, тĕрлĕрен темиçе оргăн саккун кăларас йĕркене пĕтермешкĕн вăхăт çитнех ĕнтĕ. Ун пек йĕрке саккунсем çирĕп тăрас принципа хирĕç пырат. Саккунсем çирĕп тăни пире халĕ пихăçанхинчен те ытла кирлĕ. ССР Сойузĕнче саккунсем кăларас влаçа пĕр оргăн, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ çеç тытса пымала“.

Саккунсем хатĕрлекен Комиççисем умĕнче саккунсем хатĕрлес тĕлĕшпе паха тĕслĕх пур: вăл—историлĕ комиççи, çав комиççи Сталин йулташ йертсе пынипе совет государствин тĕп саккунне—ССР Сойузĕн Сталинла Конституцине туса хатĕрлерĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне совет саккунĕсене кăларакан пĕртенпĕр сăлкус вырăнне хурса йышăнни шăпах Конституцине килĕшсе пурнăçа кĕрсе пырат, çав вăхăтрах чылай фашисла государствăсенче саккун ăнлануне те пĕтерсе лартнă, хăйсене „демократилĕ“ тесе калакан ытти государствăсенче парламентсен саккун кăларас ĕçне пĕтĕм влаçлă президентсем йе министрсен кабинечĕсем, тĕрĕссипе илсен, пачах пăчлантарса лартнă тесе калас пулат. Рабочисемпе хресченсен государствинче анчах чăн-чăн саккунлăх пуçпулса тăрат, чăн-чăн правалă системă пур. Социалисăмлă государствă анчах хăйĕн мĕн пур гражданĕсене саккуна хытă хисепleme вĕрентет.

Сойуз Совечĕн Бӳджет Комиççипе Националънăçсен Совечĕн Бӳджет Комиççийĕн пахалăхĕ те кунтан пĕчĕкех мар. Бӳджет вăл—совет çĕршывĕн хуçалăхлă, кулътурăлă, оборонăлă пĕтĕм пурнăçĕпе ĕçне палăртса тăраканни. Вăлах тата халăх аллинче контролъ тумали хăватлă хатĕр те. Державăлă хуçа пулнă май, совет парламенчĕ мĕн пур доходсемпе расходсене тĕрĕслет. Аслă Совет çирĕплетнĕ бӳджет вăл—Совет государствин чи кирлĕ саккунĕ, тата Бӳджет Комиççисене туса хуни—Аслă Совет çирĕп те влаçлă хуçа пулассине, вăл çĕршыв хуçалăхĕнче пĕр тенкĕ укçана та ахалъ сайа йарас çуккине, пирĕн оборонăна вăйлатнă çĕре, пирĕн кулътурăна тĕреклетнĕ çĕре укçа-тенкĕ йăма хĕрхенсе тăманнине ĕнентерсе парат.

Бӳджета малтанласа пăхса тухас тĕлĕшпе ĕçлекен авторитетлă, çирĕп комиççисем суйласси—мĕн пур капиталисăмлă çĕршывсенче парламентсене бӳджет контролĕнчен сирсе йанă вăхăтра, тĕнче вăрçине хатĕрленнĕ çĕре тата халъхи вăхăтра пыракан вăрăхурахла вăрçă валъли халăхран калама çук нумай укçатенкĕ сăптăрса илсе пĕр контролъсĕр тăкаланă вăхăтра пулса иртет.

Рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствинче çеç тулли саккунлăх пуçпулса тăрат, халăх хуçалăхĕнче чăн-чăн правалă системă çĕнтерсе илнĕ тата гражданесем социалисăмлă финанссене, халăх укçи-тенкине расходланине хисепleme вĕренеççĕ.

Йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççисене суйлани уйрăм вырăн йышăнса тăрат. Вăл суйлавсем—совет халăхĕн представителĕсем, коммунисем тата партире тăманнисем, совет правителствипе пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пыракан Сталинла мир политикине йăлтах хапăл тунине кăтартса пачĕç. Çак политикă Аслă Советра хăватлă тĕрек тупрĕ. Икĕ палати те пирĕн хĕрӳлĕ йуратакан Хĕрлĕ Çара тăвăллă оваци туса саламларĕç, вăл Хĕрлĕ Çар пирĕн çĕршывра мирлĕ социалисăм строителствине хурал тăрат.

Йутçĕршыв ĕçĕсем тĕлĕшпе йалан ĕçлекен Комиççисем суйлани вăл—Ленин—Сталин партийĕн тулашри политики—халăх политики пулнине ĕнентерсе парат. Аслă Советăн,—вăл совет çĕршывĕн державăлă хуçи пулнă май,—йутçĕршыв политикинче чи пысăк правăсем пур. Вăл вăрçă тата мир ыйтувĕсене татса парат. Сойуз Совечĕпе Националънăçсен Совечĕ йутçĕршыв политики йенĕпе ыйтусем хатĕрлессипе Комиççисене шанса панă, вăл Комиççисем авторитетли çинчен вĕсен председателĕсемпе членĕсен йачĕсем уçсăн каласа парассĕ. Депутат Жданов йулташ Сойуз Совечĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççине йертсе пырат, депутат Булганин йулташ—Националънăçсен Совечĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Комиççине. Çĕршыв пурнăçĕшĕн чи кирлĕ ыйтусене хатĕрлесси Сталин соратникĕсемпе учеликĕсен, совет тăван çĕршывĕн хĕрӳлĕ патриочĕсен çирĕп, шанчăклă аллинче тăрат.

Сойуз Совечĕпе Националънăçсен Совечĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Йаланлăх Комиççисене суйласси—капиталисăмлă çĕршывсенче пур çĕрте те халăха вăрçă тата мир ыйтувĕсене татса панă çĕртен йăлтах сирсе йанă вăхăтра пулса-иртет. „Демократилĕ“ çĕршывсенче те буржуазин йутçĕршыв политики халăха хирĕç тунă вăрттăн заговор пулса тăчĕ.

Рабочисемпе хресченсен социалисăмлă государствинче анчах парти, правителствă тата халăх тулашрипе шалти пĕтĕм политикăра пĕрлĕхлĕ. ССР Сойузĕнче çеç халăх представителствипе Халăх Комиссарĕсем мĕн пур ыйтусем тăрăх, вăл шутрах тулашри политикă ыйтувĕсем тăрăх та, пĕрле ĕçлеме пултараççĕ. Çĕршывăн державăлă хуçи пулнă май, Аслă Совет тулашри политикăна Сталин йулташ çирĕп, тимĕр алăпа хурса панă çулпа,—мир тата оборонă çулĕпе илсе пырат. Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар та, пирĕн Наркомвнуделецсем—капиталисăмлă йĕритавралăх пирĕн çĕршыва йарса тăнă тата малашне те йарса тăма хăтланакан шпионла-диверсантла, троцкисла-бухаринла тасамарлăхсемпе кĕрешекен тимĕр борецсем те Аслă Советра хăватлă та йуратнă тĕрек тупаççĕ.

Пĕр ытлашши сăмахсемсĕр, буржуалă парламентсенчи пек павраmasăр, Сойуз Совечĕпе Националънăçсен Совечĕ йаланлăх Комиççисен суйлавĕсене ĕнентерӳлĕн те ĕçлĕн туса иртерчĕç. Кусем калаçакан мар, ĕçлекен парламентăн чăн-чăн рабочи оргăнĕсем. Пирĕн совет пурнăçĕнче, капиталисăмлă государствăсенчи пек мар, комиççисем парламента хирĕç пырасси çук тата пулма та пултараймаст, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра капиталиссемпе помещиксем çук.

Йаланлăх Комиççисем туса хунипе Аслă Совет хăйĕн кулленхи практикăлă государствăлă ĕçне пуçласа йачĕ. Пĕтĕм çĕршыв хăйĕн депутачĕсене халăх телейĕшĕн, пирĕн тăван çĕршывăн вăйĕпе чапне ӳстерессишĕн тăвакан хăйсен ĕçĕнче çитĕнӳсем тума сунат. ССР Сойузĕн Аслă Совечĕ сталинла çулпа коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерӳвĕсем патне пырат.

(„Правда“ умстатйи, йанварĕн 14-мĕш).

Сойуз Совечĕн 1938 çулхи йанварĕн 14-мĕшĕнче пулнă ларувĕ çинчен информацилĕ пĕлтерӳ

Йанварĕн 14 мĕшĕнче кăнтăрла 11 сехетре Сойуз Совет ларувĕсен залĕнче Кремльре Сойуз Совечĕн виççĕмĕш ларувĕ пулса иртнĕ.

Ларува председател пулса йертсе пыраканĕ—Сойуз Совечĕн Председателĕ депутат А. А. Авдрейев.

Сойуз Совечĕ Сойуз Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслени çинчен Сойуз Совечĕн Мандат Комиççи Председателĕ депутат А. С. Шчербаков йулташăн докладне итленĕ.

Шчербаков йулташ Сойуз Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене 569 суйлав округĕ тăрăх тĕрĕслени çинчен Сойуз Совечĕн Мандат Комиççийĕ йышăннă постановленине вуласа парат:

„Тĕп Суйлав Комиççи Сойуз Советне суйлас тĕлĕшпе кашни депутат пирки уйрăмăн тăратнă мĕн пур суйлав докуменчĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Сойуз Совечĕн Мандат Комиççи çакна палăртат:

1. Пĕтĕм 569 суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне депутатсем суйлассине ССР Сойузĕн Конституцийĕ тата ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени тăрăх тата вĕсемпе пĕтĕмпех килĕшӳлĕн туса иртернĕ.

3. Пĕр-пĕр суйлав округĕ тăрăх суйлава улăштарма нимĕнле сăлтав та çук, çавăн пекех тата Сойуз Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе Конституцине тата суйлав Положенине пăсни çинчен суйлав округĕсенче те, Тĕп Суйлав Комиççинче те нимĕнле жалăбăсемпе зайавленисем те çук.

Çакăнта каланисем тăрăх Сойуз Совечĕн Мандат Комиççийĕ Сойуз Совечĕн Тĕп Суйлав Комиççинче регистрациленĕ мĕн пур депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнат, вăл депутатсен спискине „Известия“ хаçатăн 1937 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшĕнче тухнă 291-мĕш номĕрĕнче пичетлесе кăларнă.

Депутат А. А. Байков академик сĕнӳвĕпе Сойуз Совечĕ Мандат Комиççи доклачĕ тăрăх çакăн пек постановлени йышăнат:

„Мандат Комиççи докладне итлесе, Сойуз Совечĕ çапла йышăнат:

1. Сойуз Совечĕн мĕн пур 569 суйлав округĕ тăрăх суйланă тата ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи регистрациленĕ депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнакан Мандат Комиççи докладне çирĕплетес.

2. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи ĕçне пĕтнĕ тесе шутлас“.

Мандат Комиççи доклачĕ тăрăх постановлени йышăннă хыççăн, Сойуз Совечĕн виççĕмĕш ларувĕ хупăнат.

Националънăçсен Совечĕн 1938 çулхи йанварĕн 14-мĕшĕнче пулнă ларувĕ çинчен информацилĕ пĕлтерӳ

Йанварĕн 14-мĕшĕнче каçхине 6 сехетре Националънăçсен Совет ларувĕсен залĕнче Кремльре Националънăçсен Совечĕн иккĕмĕш ларувĕ пулса иртнĕ.

Ларува председател пулса йертсе пыраканĕ — Националънăçсен Совечĕн Председателĕ депутат Н. М. Шверник.

Националънăçсен Совечĕ Националънăçсен Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене тĕрĕслени çинчен Националънăçсен Совечĕн Мандат Комиççи Председателĕ депутат Садык Нурпеисов йулташăн докладне итленĕ.

Нурпеисов йулташ Националънăçсен Совечĕн депутачĕсен полномочийĕсене 574 суйлав округĕ тăрăх тĕрĕслени çинчен Националънăçсен Совечĕн Мандат Комиççи йышăннă постановленине вуласа парат:

„Тĕп Суйлав Комиççи Националънăçсен Советне суйлас тĕлĕшпе кашни депутат пирки уйрăмăн тăратнă мĕн пур суйлав докуменчĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Националънăçсен Совечĕн Мандат Комиççи çакна палăртат:

1. Пĕтĕм 574 суйлав округĕ тăрăх Националънăçсен Советне депутатсем суйлассине ССР Сойузĕн Конституцийĕ тата ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени тăрăх тата вĕсемпе пĕтĕмпех килĕшӳлĕн иртерне.

2. Пĕр-пĕр суйлав округĕ тăрăх суйлава улăштарма нимĕнле сăлтав та çук, çавăн пекех тата Националънăçсен Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе Конституцине тата суйлав Положенине пăсни çинчен суйлав округĕсенче те, Тĕп Суйлав Комиççинче те нимĕнле жалăбăсемпе зайавленисем те çук.

Çакăнта каланисем тăрăх Националънăçсен Совечĕн Мандат Комиççийĕ Националънăçсен Совечĕн Тĕп Суйлав Комиççинче регистрациленĕ мĕн пур депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнат, вăл депутатсен спискине „Известия“ хаçатăн 1937 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшĕнче тухнă 291-мĕш номĕрĕнче пичетлесе кăларнă“.

Депутат В. Й. Симочкин йулташ сĕнӳвĕпе Националънăçсен Совечĕ Мандат Комиççи доклачĕ тăрăх çакăн пек постановлени йышăнат:

„Мандат Комиççи докладне итлесе, Националънăçсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Националънăçсен Совечĕн мĕн пур 574 суйлав округĕ тăрăх суйланă тата ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççинче регистрациленĕ депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнакан Мандат Комиççи докладне çирĕплетес.

2. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп Суйлав Комиççи ĕçне пĕтнĕ тесе шутлас“.

Мандат Комиççи доклачĕ тăрăх постановлени йышăнна хыççăн, Националънăçсен Совечĕн иккĕмĕш ларувĕ хупăнат.

Сойуз Совечĕн Мандат Комиççи Председателĕ депутат А. С. Шчербаков тунă доклад

Йанварĕн 14-мĕшĕнче Сойуз Совет Çеççин ларувĕнче Мандат Комиççин ĕçĕ çинчен Сойуз Совечĕн Мандат Комиççи Председателĕ депутат А. С. Шчербаков доклад туса панă.

Шчербаков йулташ Сойуз Совечĕн депутачĕсен составне характеристикă парса тухат. Сойуз Совечĕн депутачĕсем хушшинче Пĕтĕм Сойузри Коммунисла Парти членĕсем 461, йе 81 процент тата партире тăманнисем 108, йе 19 процент. Çак хисепсенчен тухса тăракан пĕрремĕш вывод вăл акă мĕнле,—тесе калат Шчербаков йулташ,—пирĕн коммунисла парти калама çук пысăк авторитетпа тата халăх шанăçĕпе усă курат. Иккĕмĕш вывод вăл акă мĕнле: çак иртнĕ çулсем хушшинче парти—тӳрĕ, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшакан, халăх умĕнче авторитетпа усă куракан, партире тăман питĕ нумай болъшевиксене вĕрентсе ӳстерме пултарчĕ.

Сойуз Совечĕн депутачĕсем хушшинче рабочисем 247 çын, йе 45,3 процент; хресченсем 130, йе 23,7 процент; служăшчисемпе совет интеллигенцийĕ 169, йе 31 процент. Рабочисенчен 201 çынĕ парти, совет, хуçалăх, çар тата общественăлă ĕçре ĕçлеççĕ.

Парти, государствă ĕçĕнче тата урăх ĕçре йертсе пыракан вырăна лартнă рабочисем хушшинчен нумайĕшĕсем граждан вăрçипе социалисăм строителствин вучахĕ витĕр тухнă. Çаксемпе пĕрлех йертсе пыракан ĕçе питĕ нумай кадрсем çĕкленчĕç, вĕсем нумайăх та пулмаст станок патĕнче ĕçлене. Çак ушкăнăн представителĕ— государствă влаçĕн чи аслă оргăнĕн тĕнчипе чи çамрăк членĕ, çавăн пекех тата пысăк предприйати—Родниковск пирвăр комбиначĕн директорĕн тĕвчипе чи çамрăк заместителĕ 19 çулхи ткачиха Клавдийа Федоровна Сахарова пулса тăрат. (Алă çупаççĕ.)

Хресченсен шутĕнчен—79 çын парти, совет, çар, хуçалăх тата ытти ĕççенче ĕçлеççĕ.

Йалхуçалăхĕнче ĕçлекен хресчен-колхозниксем, Сойуз Совечĕн депутачесем, пурте социалисăмлă уйхирсен стахановецисемпе йатлă çыннисем пулса тăраççĕ. Сойуз Советне депутата суйланă хресченсем хушшинче—колхоз председателĕсем 25 çын.

Сойуз Совечĕн пĕтĕм депутачĕсем хушшинче—служăшчисемпе совет интеллигенцийĕ 169 çын. Вĕсенчен парти ĕçĕнче ĕçлекенсем—32 çын, совет ĕçĕнче—78 çын, çар ĕçĕнче ĕçлекенсем 24 çын т. ыт.

Совет интеллигенци шутĕнчен—академиксем 9 çын, профессорсем—6, ăслăлăх работникĕсем, писателсем, артиссем.

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Аслă Совечĕ,—тет Шчербаков йулташ,—совет халăхĕ хушшинчен хăйне валъли чи малта пыракансемпе чи активлисене суйласа илчĕ. Сойуз Совечĕн депутачĕсем хушшинче орден илнĕ депутатсем 242 çын, йе 42,5 процент пулнине каласан та çитĕ. (Алă çупаççĕ).

18 депутат Совет Сойузĕн Геройĕсем пулса тăраççĕ. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Сойуз Совечĕн депутачĕсем: вырăссем, украинецсем, йеврейсем, белоруссем, грузинсем, узбексем, тутарсем, казахсем, армиансем, азербайджанецсем, латышсем, чăвашсем, полъаксем, нимĕçсем, мордвинсем, грексем, таджиксем, киргизсем, туркменсем, удмуртсем, башкирсем, болгарсем, кара-калпаксем, кабардинецсем, йакутсем, чеченецсем, марийецсем, ненецсем, естонецсем пулаççĕ.

Çакăнта ĕнтĕ ССР Сойузĕнчи халăхсен Сталинла туслăхĕ палăрса тăрат. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сойуз Совечĕн депутачĕсем хушшинче — 77 хĕрарăм. Нимĕнле буржуалă парламентра та никăçан та хĕрарăмсен хисепĕ çакăн чухлĕ пулман, çук та. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сойуз Совечĕн депутачĕсем хушшинче аслă шкулсенче вĕренсе пĕлӳ илнисемпе аслă шкултан вĕренсех тухайманнисем — 110 çын; вăтам пĕлӳ илнисемпе вăтам пĕлӳ илсех пĕтерейменнисем — 158 çын. Çапла вара, Сойуз Совечĕн депутачĕсенчен çуррине йахăнах аслă пĕлӳпе вăтам пĕлӳ илнĕ.

— Сойуз Совечĕн депутачĕсене характеристикă парса пĕтерес тесен, манăн тата тепĕр икĕ факт палăртса хăварма кирлĕ, — тет Шчербаков йулташ.

Пĕрремĕш факт. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче совет халăхĕ Сойуз Советне Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекен работниксен ушкăнне суйларĕ. (Шавлăн алă çупаççĕ). Çапла тунипе совет халăхĕ каратеnăй оргăнсем халăх тăшманĕсене, ирсĕр сутăнчăксене, Йапонипе Германи фашисăмĕн троцкисла-бухаринла тарçисене çĕмĕрсе тăкса пĕтерсе пырас тĕлĕшпе тăвакан ĕçе татах та тепĕр хут ырларĕ. (Пĕтĕм зал шавлăн алă çупат, вырăнсенчен: „Сывă пултăр Йежов йулташ!“ тесе кăшкăраççĕ).

Иккĕмĕш факт. Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче совет халăхе халăх йуратакан Хĕрлĕ Çар тăвас тĕлĕшпе партипе правителствă тытса пыракан политикăна пĕтĕмĕшпех ырларĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Сойуз Советне Хĕрлĕ Çар представителĕсен пысăк ушкăнне — рйадовой красноармейецсене, командирсене, политработниксене, Хĕрлĕ Çар руководителĕсене суйласа, совет халăхĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче çапла каларĕ: Хĕрлĕ Çара вĕçĕмсĕр йуратăтпăр, Хĕрлĕ Çара ку таринччен те тĕреклетрĕмĕр тата малашне те тĕреклетсех пырапăр, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар пирĕн мирлĕ ĕçе сыхлат, пирĕн чиксене хурал тăрат. (Нумайччен шавлăн алă çупаççĕ).

Çак цифарсем коммунисемпе партире тăманнисен блокĕ пĕтĕмĕшпех çĕнтерни çинчен ĕнентерсе параççĕ, вăл блок Совет влаçĕ вăхăтĕнче, рабочисемпе хресченсен мĕн пур тăшманĕсемпе хайаррăн кĕрешсе пынă çулсенче туптанса тĕреклетнĕ.

Пирĕн парти совет обшчествине никам аркатайми вăй туса пĕтеçтерме пултарчĕ. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан ĕççыннисене никам та çĕнтерме пултараймаст. Совет халăхĕ коммунисăм патне çĕнтерӳлĕн пынине тытса чарма пултаракан чăрмав, вăй тĕнчере çук. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. Вырăнсенчен: „Сывă пултăр Сталин йулташ! Урра!“—тесе кăшкăраççĕ. Тăвăллăн алă çупаççĕ: „Урра!“ тесе кăшкăраççĕ. Алă çупнинчен оваци пуçланса кайат).

Рабочисем Аслă Совета чĕререн саламлаççĕ

Шупашкар хулинчи предприйатисенчи рабочисемпе работницăсем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн историлĕ пĕрремĕш Çеççийĕн ĕçĕсем çинчен пĕлтернĕ хыпарсене питĕ интересленсе вулаççĕ.

Йанварĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Деткомиççин катка-пичке заводĕнчи рабочисемпе работницăсем Аслă Совет Çеççине саламласа митинг туса иртерчĕç.

Хăйсен резолюцийĕнче рабочисемпе работницăсем çапла çыраççĕ:

„Епĕр Аслă Советăн пĕрремĕш Çеççине пухăннă депутатсене тата пĕтĕм совет халăхĕн депутатне аслă Сталин йулташа хĕрӳлĕ салам йаратпăр. Епĕр йанварти çур уйăх планне ытлашшипех тултартăмăр. Социалисăмла ăмăртăва тата анлăн сарса, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе, сталинла виççĕмĕш пйатилеткăн малтанхи çулĕн пĕрремĕш квартал планне срукчен тата ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешетпĕр“.

Тир-сăран заводĕнче йанварĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла каннă вăхăтра цехра ĕçлекен Абакумов йулташ пĕрремĕш Çеççин йанварĕн 14-мĕшĕнчи ĕçĕсем çинчен вуласа пачĕ. Рабочисемпе работницăсем Çеççи хыпарĕсене пысăк кăмăлпа итлеççĕ. Стахановкă Никитина йулташ çапла каларĕ:

„Пирĕн депутатсем хăйсем çине ĕçхалăх хунă пысăк шанăçа хисеплĕн пурнăçласа пычĕç. Çак историлĕ Çеççине чысласа, епĕр, тир-сăран заводĕнчи стахановецсем, халиччен пулман çитĕнӳсем тума сăмах паратпăр“.

Националънăçсен Совечĕн йанварĕн 14-мĕшĕнче пулнă ларувĕн дневникĕ

Националънăçсен Совечĕн залне лару пуçланиччен чылай малтан депутатсем пырса тулаççĕ.

Правителствă ложи çине Сталин, Молотов, Ворошилов, Каганович, Калинин, Андрейев, Микойан, Жданов, Йежов, Чубарь, Косиор, Петровский, Хрущчев, Булганин йулташсем тухсан, депутатсем вĕсене чылай вăхăт хушши хавасланса оваци туса кĕтсе илеççĕ.

Националънăçсен Совечĕн Председателĕ депутат Н. М. Шверник лару уçăлнă тесе пĕлтерет те доклад тума Мандат Комиççи Председателне С. Нурпеисов депутата сăмах парат.

Нурпеисов йулташ коммунисемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăлани—нумай нацилĕ Совет Сойузĕнчи мĕн пур ĕççыннисем Ленин—Сталин партийĕн аслă йалавĕ айне пĕрлешнине çирĕплетни çинчен калат. Совет Сойузĕнчи халăхсем болъшевиксен партийĕшĕн, ĕççыннисен аслă çулпуçĕшĕн—Сталиншăн сасăларĕç. Залра пурте ура çине тăраççĕ. Пурте Сталин йулташ ларакан ложă çине пăхаççĕ. Тăвăлла оваци туса узбек, армйан, башкир тата ССР Сойузĕнчи ытти халăхсен чĕлхисемпе: „Сывă пултăр Сталин йулташ! Сталина—урра“ тенĕ сасăсем йанраса кайаççĕ.

Нурпеисов йулташ Çеççине Националънăçсен Совечĕн депутачĕсен составĕ çинчен калакан уçамлă цыфрăсемпе фактсем пĕлтерет.

Националънăçсен Советне 54 националънăçрен представителсем суйланă, тет Нурпеисов йулташ.

Çеççи çак ленинла-сталинла наци политики çĕнтерни çинчен чĕррĕн палăртса тăнине сăмахпа калама çук хавхаланса кĕтсе илет. Депутатсем пурте пĕр харăс ура çине тăрса халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа саламласа тăвăллăн алă çупаççĕ.

Хĕрарăма пусмăртан кăларассишĕн тата ăна обшчествăлă-политикăлă пурнăçа йавăçтарассишĕн кĕрешсе тунă çитĕнӳсене Националънăçсен Советĕнче 110 хĕрарăм хутшăнни уççăн çирĕплетсе парат. Националънăçсен Совечĕн составĕнче хĕрарăмсем 19 процент.

Нацилĕ республикăсемпе автономлă облаçсенче хăйсен интеллигенци ӳсрĕ. Чи лайăх рабочисемпе тата колхозниксемпе пĕрлех служăшчисемпе совет интеллигенци хисепĕнчен Националънăçсен Советне 156 депутат суйланă.

Нурпеисов йулташ социалисăм çĕнтерӳне парти, аслă Сталин йертсе пынипе, Йапонипе Германи фашисăмĕн мĕн пур троцкисла зиновйевла, бухаринла, рыковла тата националисла агенчĕсемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе пырса тата малала та кĕрешнипе туни çинчен каласан—депутатсем сталинла хастарлă Наркома—Н. И. Йежов йулташа, совет çĕрне халăхăн мĕн пур тăшманĕсенчен тасатакан мухтавлă Наркомвнуделецсене хисеплесе чылай вăхăт хушши оваци тăваççĕ.

Йулашкинчен Нурпеисов йулташ мĕн пур депутатсен полномочийĕсем тĕрĕсси çинчен Мандат Комиççи тунă вывода Çеççире çирĕплетме тăратат.

Мускав, Ленинград, Белоруççи, Казахстан депутачĕсен ушкăнĕнчен депутат В. Й. Симочкин Мандат Комиççин докладне çирĕплетме тата Тĕп Суйлав Комиççин ĕçне пĕтнĕ тесе йышăнма сĕнӳ парат.

Националънăçсен Совечĕ ку сĕнӳве пĕр сасăпах çирĕплетет.

В

Çуракине хатĕрленес ĕçре кайа йулнине пĕтерер

Çуракине хатĕрленес ĕç „Комсомолец" колхозра

Елĕк районĕнчи Кармал йалĕнчи „Комсомолец" колхозра çуракине хатĕрлегес ĕç партипе правительствă кăтартнă пек çителĕклĕ пулса пымаст. Ку вăл, паллах, ĕçе правлени членĕсемпе бригадирсем кирлĕ пек йертсе пыманнинчен килет.

Колхозăн кăçалхи çуракинче пĕрчĕлĕ тырăсем пĕтĕмпе 129 гектар, техникăлă культурăсем 6 гектар, çĕрулмипе тымарçимĕçсем 10 гектар акса хăвармала. Çав çĕр çине акма вăрлăх (клевер вăррисĕр пуçне) кирлĕ таран хатĕрлесе хунă. Уйрăмăн илсен çурхи тулă 30,4 центнер, йасмăк 8,4 центн., урпа, 5,4 центн., сĕлĕ 117 центн., пăри 3,6 центн., пăрçа 10,5 центн., викă 33 центн., кантăр вăрри 10 центнер, çĕрулми 170 центнер хатĕрленĕ. Çав вăрлăхсене тасатса хурас тата суртсăр вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарас ĕçсем начар вырăнта тăраççĕ. Вăрлăхсене тасатса хума тытăнман. Вырăнти суртсăр сĕлĕ вăрлăхне, райçĕрĕçпайĕ кăтартса панă тăрăх, колхозăн пĕтĕмпех Пиçенер колхозĕпе улăштармала. Анчах пайанхи куна çитсе те ăна улăштарман-ха. Колхозăн вăрлăх хатĕрлесе çитерес ĕçре тепĕр хăрушлăх пур, клевер вăрри 6,24 центнер çитмест. Çитмен клевер вăррине ăçтан тупасси çинчен правлени шухăшласа та пăхмаст.

Çуракинче кирлĕ йалхуçалăх машинĕсемпе ытти хатĕрсене йусама тытăнман. Чăнах та сейалкă йусавлă, вăл йур кĕрекен сарайĕнче ларат. Анчах плугăсем, сÿресем пĕтĕмпех йусавлă мар. 1-мĕш бригадăн 4 плугă ремонт тумала, вĕсене халĕ те ремонт тума тытăнман. Бригадăн бригадирĕ Марков плугăсене хăвăртрах ремонт тума тăрăшмаст. 2-мĕш бригадăн плугăсем кирлĕ таран пур, вĕсем йусавлă, анчах сарай хысĕнче йур айĕнче лараççĕ. Кашни бригадăрах туртасем çитмеççĕ пулин те, вĕсене тума тытăнман.

Лашасем пĕтĕмпе 39 пуç, вăл шутран ĕçлеме йурăхлисем 30 пуç, тыхасем 9 пуç шутланаççĕ. Ĕçлеме йурăхлă кашни лаша валли сĕлĕ 9-шер центнер, тыхасем валли 5,5 центнер тата утă-улăм та çителĕклĕ уйăрса хăварнă. Вăл апатсене конюхсене актăпа панă.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешнĕ май, агротехникăлă мероприйатисене пурнăçа кĕртсе пырассине те çителĕклипе пуçарса йаман.

Ф. Филиппов.

Çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатма мĕн чарат

ПАТĂРЙЕЛ, декабĕрĕн 15-мĕшĕ. (Телефон тăрăх, хамăр корр). Тăрай йалсоветĕнчи колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе вуçех тытăнман. Вăрлăх хывса пĕтермен, суртсăр вăрлăхсене суртлипе улăштарман, Роза Люксембург йачĕпе тăракан колхозра 1 трийер, 2 триумф тата „Хĕрлĕ Патăрйел" колхозра 2 триумф ахалех лараççĕ. Вăрлăхсен пахалăхне тĕрĕслеме тытăнман. Йалхуçалăх машинĕсене йусамаççĕ, уйра йур тытас, минераллă удобренисене кÿрсе килес ĕçсене организацилемен. Колхозсенче агроплансем тума тытăнман та.

Çуракине хатĕрленме мар, колхозсем авăн çапса та пĕтермен. „Хĕрлĕ Патăрйел" колхоз председателĕ Рубцов авăн çапас ĕçе çитес çула хăварма шутланă. „Октябĕр йалавĕ" колхозра çапнă тырра 30 колхозник килне документсемпе йĕркелемесĕрех хывнă. Йалсоветĕнче нихăш колхозра та тырпулсене колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе паман.

Çĕнĕ Ахпÿрт йалсоветĕнчи колхозсем те çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Çакă вăл, чи малтанах авăн çапса пĕтерменнинчен килет. Анчах ку ĕçе колхозсенче сăтăрла ĕçсем тăвакан етемсем чăрмантарса пыраççĕ. Сталин йачĕпе тăракан колхозри виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ Йузеров колхозниксене ĕçкунĕсене темиçе уйăх хушши çырса паман. Хăй ĕçке йерсе кайнă. Колхозниксем авăн çапма тухма пăрахнă. Çак Йузеров кăçал темиçе çĕр пăт вырăх кăшманне çĕртсе йанă. Ака тата Петухов П. бригадинче 500 лав тулла итем çинче йурийех урпапа хутăштарса йанă. 5-мĕш бригадăн бригадирĕ Саптейев кантăрвăрри тата ыраш çĕртсе йанă. 6-мĕш бригадăра та 100 пăт сĕлĕ çĕртсе йани пулнă.

Йалсовечĕ колхозри сăтăрçăсене ответ тыттарас тĕлĕшпе сахал мар решенисем йышăннă. Анчах вĕсем хут çинче çеç йулаççĕ.

Н. Пушкин.

Клубри çитменлĕхсем

Тутаркас районĕнчи Пушкăртри клубра культмассăлă ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Колхозниксемпе йединоличниксем пушă вăхăтра спектакль, кино, вечерсем курасшăн, анчах вĕсене клубра туса иртермеççĕ. Клубăн библиотекă пур. Библиотекă пуçлăхĕ Й. Федорова заньатине йĕркелĕ çÿремен пирки, кĕнекесене улăштарса илсе вулама çук.

Г. Шаров.

Ĕç вăраххăн пырат

СĔНТĔРВĂРРИ. Çак кунсенче Хурапхари „Октябĕрĕн 13-мĕш çулĕ" колхоз 25,3 центнер суперфосфат, 28 центнер кали тăварĕ, 48 центнер фосфорит çăнăхĕ турттарса хатĕрлерĕ. Çакăн пекех Тупай Ĕсмĕлĕнчи „Красная Чувашия" колхоз та тĕрлĕрен минераллă çăнăхсене—45 центнер, Чĕнерти „Стрела"—27 центнер, Иккĕмĕш Чурашри „Çĕнĕ йала"—62,8 цент., Кушмарти „Комсомолец"—72,3 ц., Кудемерти „Трудовик"—42 ц., Пуснаркассинчи „Майăн 1-мĕш" колхоз 77,1 центнер туртарса хатĕрлерĕç.

Пĕтĕмĕшпе илсен районра минераллă çăнăхсем турттарса хатĕрлесси ытла та вăраххăн пулса пырат. Пайанхи куна районĕпе 38 колхозра кăна минераллă удобренисем хатĕрлес ĕçе пуçăннă. Пĕр колхоз та тĕрлĕрен имçамсем хатĕрлес плана тултарман. Районĕпе 30 процента йахăн çеç пурнăçланă.

Нерйадовори „Красный Волгарь" колхозăн план тăрăх Вăрмар станцинчен 69 центнер суперфосфат, 71 центнер кали тăварĕ, 34 центнер фосфорит çăнăхĕ турттарса хатĕрлемеле. Çăпах та колхоз правленинче ĕçлекенсем кун çинчен шутласа та пăхмаççĕ. Çĕнĕ Салари Сталин йачĕпе тăракан, Кушниковăри „Новая деревня", Ураковори С. М. Буденный йачĕпе тăракан колхозсем те минераллă çăнăхсем турттарса килес пирки нимĕн те тумаççĕ.

В. Василйев.

Вăйлă тырпулшăн

Шуршăлти Блÿхĕр йачĕпе тăракан колхоз (Сĕнтĕрвăрри р.) çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе вăрлăхсене хĕрсех тасатат ĕнтĕ. Халĕ пăрçа вăрлăхне алăпа суртлама колхозниксене валеççе панă.

Çурхи нÿрĕне ытларах тытса йулас майпа 160 гектар çине йур тытса хăварнă. Минераллă çăнăх 40 центнер кÿртсе килнĕ.

Çакăнпа пĕрлех тата пайанхи куна 2 бригадă плугăсене, тырă акмали машинсене йусаса склада тирпейлесе кÿртсе лартнă.

Вăрлăхсене тасатас ĕçре Антонов В. колхозник хăй тунă сортировкăпа ĕçлет, вăл кашни минутрах пĕрер пăт вăрлăх тасатса кăларат.

1938 çулхи тырпул тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе Шуршăл колхозĕ, Шĕнерпуçĕнчи „Кустар" колхозпа социалисăмла ăмăрту договорĕ турĕ. Кунсăр пуçне кашни бригадă пĕр-пĕринпе ăмăрту договорĕсем турĕç.

Колхозниксем фекали туртараççĕ. Кашни килĕре кĕл пухса пыраççĕ.

Çуракине хатĕрленнĕ май агротехникă кружокĕнче 81 колхозник вĕренсе пырат. Кружока колхоз председателе Громов йулташ йертсе пырат.

Г. Иванов

4 çул хушши фермăра

Кăташри „Пионер" колхозри колхозницă Иринă Иванова сĕтçу ферминче 4 çул хушши ĕçлет. Иванова пăхнă ĕнесем самăр та таса. Ĕнесене вăл вăхăтра апат парат, шăварат, тасатса тăрат. Халĕ 11 ĕне пăрулаçа пачĕç.

Иванова Иринăна колхоз правлени фермăра тăрăшса ĕçлесе пынăшăн ăратлă пăру парса премилерĕ.

М. Чечек.

Йетĕрне р.

Осоавиахим организацисенче

* Шупашкарти стройтехникум çумĕнчи Осоавиахим организацийĕ авăн ĕçлет. Кунта 1937 çулта пĕтĕм студентсенчен 15 процентĕ Ворошилов пек тĕл перекенсен значокне илнĕ. Белов Анатоли йаланах 46 очкоран кайа мар илет. Вăл техникумра тĕл перессипе пулса иртнĕ ăмăртура пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Иртнĕ çулта стройтехникумсенче вĕренекенсен Пĕтĕм Сойузри ăмăртувĕнче Белов йулташ иккĕмĕш вырăн йышăннă. Уншăн ăна хăйĕн йачĕпе значок туса парса парнеленĕ.

Çакăн пекех стройтехникумри студентсенчен 20 процент ытла ПВХО значокне илнĕ. Йанварĕн 1-мĕшĕнче тата 12 студент ПВХО нормине пачĕç. Вĕренÿ çулĕ пĕтиччен кашни студентах икĕ оборона значокĕнчен кайа мар илессишĕн тăрăшаççĕ.

И. Семенов.

* Малти Чиперуйĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) Урицкий йачĕпе тăракан колхозри Осоавиахим организаци оборонă ĕçне вĕренессипе лайăх ĕçлет. Халĕ Осоавиахим членĕсем винтовкă пайĕсемпе противогаз çинчен вĕренчĕç. Çак кунсенче çеç 18 çын ПВХО нормисене парса значоксене алла илчĕç. Хĕрлĕ çар 20 çул тултарнине кĕтсе илнĕ май, кашни каççеренех çамрăксем хушшинче Хĕрлĕ Çар историйĕпе сыхлăх ĕçĕсем çинчен калаçусем туса ирттереççĕ.

—Социалисăмла çĕршыва сыхлама вĕренесси, вăл—пирĕн чи хисеплĕ те савăнăçлă ĕç, теççĕ çамрăксем.

В. В.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителстви

Тимлĕн ĕçлени кирлĕ

Йулашки кунсенче чукунçул строителствине ĕçлеме пыракансен хисепĕ куллен ÿссе пырат. Йанварĕн 14-мĕшĕнче стройкăра Шăхасан, Ишлей, Трак тата Шупашкар районĕсенчен çураннисем 737 çын, лашаллисем 307 çын ĕçленĕ. Ĕçвайĕ парса пулăшас тĕлĕшпе Ишлей районĕ авăн ĕçлет. Вăл районран çураннисем 347 çын, лашаллисем 125 çын ĕçлеççĕ.

Анчах та строителствă ĕçĕ халĕ те йерипен пырат-ха. Пайанхи куна çĕрĕç планне 91 процент, кĕперсем хывас плана 77 процент тата трубасем тăвас плана 88 процент çеç тултарнă. Лини сарасси те йулса пырат. Çулйĕр халăх комиссариачĕн 150 çынтан тăракан бригади ĕçлеме пуçланă хыççăн та улшăнусем пулман. Йанварĕн 9-мĕшĕ тĕлне хывнă лини тăршшĕ 28 километр шутланнă пулсан, 15-мĕшне унăн тăршшĕне 29 километра кăна çитернĕ.

Мĕншĕн капла? Сăлтавсем чукунçул управлени, участкăсен руководителĕсем тата строителствăри партипе профсойуз организацисем строителствăра ĕçе стахановла йухăма вăйлатсах пынă никĕс çинче организацилеменнинче. Фактсем те çавăн çинченех калаççĕ. Йанварĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа строителствăна колхозниксем пыма пуçларĕç. Вĕсене вырнаçтарса ĕçре йертсе пырасси хăй тĕллĕн çеç пулса пырат. Строймаçтăрсем колхозниксем ĕçленĕ çĕрте хутра-ситре çеç пулаççĕ. Пулсан та ĕç çинчен лайăххăн ăнлантарса памаççĕ. Çавна пула ĕçвайĕпе туллин усă курни çук.

Суту-илÿ организацисем начар ĕçлени те пысăк чăрмав кÿрет. Строителствăра ĕçлекенсем валли çăкăр тата ытти таварсем тăратас тĕлĕшпе строителствă çумне çирĕплетнĕ йалпосем начар ĕçлеççĕ. Чăвашсойуз ку йенĕпе вĕсен ĕçне тĕрĕслесе пымаст.

Строителствăри йĕркесĕрлĕхсемпе çитменлĕхсем çинчен сигналсем нумай пулнă. Строителствă руководителĕсем вĕсем çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Вĕсем строителствă вăрăма чăсални хăйсен тимсĕрлĕхĕпе пулнине тавçăрса илсе кирлĕ выводсем туман-ха.

Плана ытлашшипех тултарчĕ

ВĂРНАР. Тÿлĕкас Мăратри „Комсомолец" колхоз Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче авăн ĕçлет. Вăл хăйне панă плана ытлашшипех тултарчĕ. Апла пулин те колхоз халĕ те чукунçул çинче ĕçлет. Ĕçре П. Кудрйашовпа М. Йевдокимов колхозниксем авăн примерсем кăтартса ĕçлеççĕ.

Ник. Козлов.

37000 чăпта

КĂКЕÇ. Паçпакри промысла ертелĕн Кайри Çатрари чăпта çапакан отделенийĕ 1937 çулхи плана ытлашшипех тултарчĕ. Отделенин 36.000 чăпта çапмала пулнă пулсан, вăл 37 пин чăпта çапса кăларчĕ.

Чăпта çапас ĕçре уйрăмăнах П. Семенова, В. Василйева, М. Йефимова стахановкăсем пример кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем 4-мĕш кварталти плансене те ытлашшипех тултарчĕç. План тăрăх 500 чăпта çапас вырăнне, 800 — 910 чăпта çапрĕç. Çавăнпах ĕнтĕ правлени Семеновăпа Василйевăна санаторине канма йачĕ.

Рабочисем хавасланса ĕçлеççĕ. Çĕнĕ çул хыççăн стахановла йухăм сарăлсах пырат. Çав вăхăтрах кунта культмассăлă ĕçе йĕркелесе йаман. Вечĕрсем, кино, спектакль лартса кăтартмаççĕ. Калаçусем те туса ирттермеççĕ.

Отделени пуçлăхĕн Николайевăн культмассăлă ĕçе туса пырассине манмала мар.

Моисейев.

1284 кубла метр хатĕрленĕ

Шорчакасси йалсоветĕнчи колхозсем (Шупашкар р.) кăçалхи вăрман хатĕрлев ĕçне тимлĕнех тытăнчĕç. Çак кунсенче вĕсем 1184 кубла метр вутă касса хатĕрлерĕç.

Вăрман хатĕрлев ĕçĕнче уйрăмăнах „Пионер" тата Каганович йачĕпе тăракан колхозсем авăн ĕçлеççĕ. Каганович йачĕпе тăракан колхозăн çак çулта договорта кăтартнă тăрăх 900 кубла метр йывăç касса хатĕрлемеле пулсан, вăл 355 куб. метр хатĕрленĕ те.

М—в.

Рабочисем çинчен маннă рабочком

Епĕр Садвинтрестри II мĕш участкăра ĕçлетпĕр, пурнасса та вăрмантах пурăнатпăр. Анчах рабочком пирĕн пата пĕрре те килсе çÿремест. Çулталăк иртрĕ ĕнтĕ, пĕр пуху та туса ирттермен.

Ĕç хыççăн епĕр вăхăта усăллăн ирттересшĕн. Пире шашкă, шахмăт патефон, хут купăс т. ыт. те кирлĕ. Кĕнекесем те çук.

Рабочком председателĕ Свердлов хăçан пирĕнпе ĕçлеме пуçлатĕ ши?

Рабочисем.

КУÇМА ЧУЛКАÇ

ГЕРА

Герă питех усал ача пулман. Ăна хăшпĕр ачасем „усал", тесе каланă пулсан та, вăл хăйне çапах та „усал" тесе шутламан.

Усал йат Герă çинчен акă мĕнле тухса кайнă.

Çентябĕрĕн пĕрремĕш кунĕ пулнă. Герă çак кун ирех тăнă та, аппĕ малтанах илсе хунă сумкăна тата детсадран асăнмалăх панă пенала илсе, иртнĕ кунсенче кăна туса пĕтернĕ çĕнĕ шкула тухса чупнă.

Çĕнĕрен тунă шкул хулари пур шкулсенчен те илемлĕрех пулнă. Унăн крыльци умĕнче икĕ пионер тăнă—пĕри рожок тытса. Герă пек шкула пуçласа килекен ачасене „вăхăтра килĕр", тесе астутарса тăнă пек туйăннă. Тепĕр йенче, çак пионер пекех тепĕр маттур пионерĕ, умне барабан çакса, ачасене каллех çавăн çинченех астутарнă пек туйăннă.

Герă хăйне вĕренме илнĕ çак çĕнĕ шкула пур ачасенчен те малтан çитсе тăнă. Вăл çак икĕ маттур пионерпа савăннă. „Маттур пионерсем, манăн та вĕсем пек пулса, çакнашкал çĕнĕ те илемлĕ шкулта паллă пионер пуласчĕ: çак пионерсем пекех, пĕтĕм ача йуратакан пионер пуласчĕ", тесе шухăшланă Герă.

Ытти ачасем те пухăнма пуçланă.

— Ех, барабан тытнине киле илсе кайасчĕ,—тенĕ ачасенчен пĕри.

— Мĕн тетĕн есĕ... Киле-и? Ку, вĕт пирĕн шкулăн,—тенĕ Герă çак ачана.

Ыттисем самантрах ун çине тимлĕн пăхса илнĕ. Вĕсен куçĕсем тăрăх, çак ачасем пурте Герăна аслă та пултаракан ача пулĕ,—тесе шухăшлани палăрса тăнă.

Анчах, самантрах, Герăран ÿксе йулас мар текен ача сиксе тухнă та:

— Епĕ ăна рогаткăпа перетĕп те, киле йатса кайатăп,—тенĕ.

— Мĕн тетĕн есĕ? Халех заведуйушчине калатăп. Ку пионерсем пирĕн шкулăн, вĕсем çакăнтах пулмала, — тенĕ Герă.

— Çапла, çапла, çакăнтах пулмала,—тесе кăшкăрнă ытти ачасем те.

Ачасем пухăннăçемĕн пухăнса пынă. Унта пуринчен ытларах, Герă пек пĕчĕк ачасем пулнă. Вĕсем пĕччен мар, аппĕпе йе амăшĕпе пынă. Хăйсен ачисене хăшĕ ытларах йуратнă, вĕсем вара, ĕçрен кайа йуласси çине пăхмасăрах, хăйсен ачисене леçме пынă.

Герă та пĕччен пулман. Вăл шкула чи малтан пĕчченех чупса çитнĕ пулсан та, унăн аппĕ самантрах çĕнĕ шкул патне пырса тăнă. Нумай та иртмен вăхăт, амăшĕ те пынă. Вĕсем вара иккĕшĕ те хăйсен йуратнă ывăлĕ Герă хăйне йепле тыткаланине сăнанă.

Герă тăмсай ача пулман. Аппĕпе амăшĕ те пынине курсан, вăл татах паттăрланса кайнă, хăйне ытти ачасенчен те типтерлĕрех тытма тăрăшнă.

Нумай та иртмен вăхăт, ачасем патне икĕ ватăрах çынсем тухнă. Пĕри—арçын пулнă. Вăл куçлăх тăхăнса тата икĕ пионер хушшине тунă картлашка тăрăх айалала анса, ачасен ушкăнĕ çине пăхса тĕлĕнсе тăнă.

Тепĕр çынĕ,—ватă хĕрарăм, каллех куçлăх тăхăннăскер, анчах унăн куçлăхĕ вуçех урăхла пулнă, çав картлашка тăрăхах аннă та тÿрех ачасен ушкăнĕ патнелле утнă.

Ачасем, малтан калаçа панă пекех, хăйсен учителĕсем тухнине сиссе илнĕ. Çак самантра, пуринчен те маттур шутласа сиккелесе çÿреме йуратнă Герă та шăпах чарăнса тăнă. Вăл пĕр вăхăтлăха хăй ача пулнине те, хăй çакнашкал нумай ачасем хушшинче тăнине те тата хăй çав ачасенчен пуринчен те маттуртарах пулма пултарни çинчен те манса кайнă, çак икĕ ватă çын çине тимлĕн пăхса тăнă.

Картлашка çинчен аннă куçлăхлă арçынпа хĕрарăм, иккĕшĕ те икĕ йеннелле пăрăнса, хăйсен аллинчи хучĕсем тăрăх пайан çеç вĕренме килнĕ ачасен йачĕсене чĕнме пуçланă.

Герă хĕпĕртесех кайнă. Вăл икĕ хăлхине те чанк тăратса, хăйĕн йачĕ пуринчен те маларах тухасса кĕтнĕ.

Анчах, унăн йачĕ хăй шухăшланă пек пур ачасенчен те малтан мар, пĕр вунă-кĕ-вунвиçĕ ача хыççăн çеç тухнă. Тепĕр йенчен, унăн йачĕ, хăй шухăшланă пек, арçын учител вулакан спискăра мар, арçын учителтен татах та ватăрах хĕрарăм учителницă вулакан спискăра пулнă.

Вăл, пайантан пуçласа хăй вĕренме шутлакан çĕнĕ те илемлĕ шкул умĕнче икĕ маттур пионер çинчен манса кайсах, ватă хĕрарăм учителницă уйăрса тăратакан ачасен ушкăнне пырса хутшăннă.

Учителсем хăйсен аллинчи спискисене вуласа пĕтерсен, ачасене шкула илсе кĕнĕ. Ачасен аппĕ-амăшĕсем килнелле саланнă.

Куçлăх тăхăннă ватă учителницă ачасене хăйĕн класне илсе кĕрсенех, малтан шăп тăма хушнă. Унтан хăйĕн аллинчи спискăна сĕтел çине хурса, класăн малти пайĕнче хĕрлĕ панулмисем парасса кĕтсе тăнă пек, тăракан ачасене çĕнĕ партăсем хушшине ларса тухма пуçланă.

Çак самантра ачасем пурте шăп пулса тăнă. Вĕсем пурте маларахри партăсем хушшине ларма ĕмĕтленнĕ. Анчах вĕсен ĕмĕчĕсем учителницă хушнине парăнса пынă. Вĕсенчен кашнийех учителницă кăтартса панă партăсем хушшине ларса тухнă. Çапла, йулашкинчен, пуринчен те лайăх пулса кайнă. Ачасем йунашар ларакан çĕнĕ йулташĕсемпе паллашма тытăннă. Çакă вĕсен пĕрремĕш урокĕ пулнă.

Иккĕмĕш урокра учителницă ачасене шкулти йĕркесемпе паллаштарнă. Вăл пурин çинчен те астутарса, вĕсене йаланах асра тытса тăма сĕннĕ. Ачасем вăл каланине питех тимлĕн итлесе ларнă. Герă та, хăйĕн пуçĕнче пулнă маттурлăх шухăшĕсене манса кайсах, çак сăмахсене тăрăшса итлесе ларнă. Çапла уншăн вăхăт иртни те сисĕнмен—коридорта шăнкăрав сасси йантăраса кайнă.

— Çак сасă,—тенĕ учителницă,—перерыв пуласси çинчен пĕлтерет. Халĕ есĕр тухса усăлса çÿретĕр те, тепĕр вунпилĕк минутранах каллех звонок пулат, вара пурте класа кĕрĕр,—тесе хытарнă.

Анчах, Герă минутсем çинчен пĕлмен, çавăнпа вăл ăна ăнланман та. Вăл учителницă класа пĕтерессине кĕтмесĕрех, коридора чи малтан сиксе тухса, хыттăн чупса кайнă. Çапла вăл, çак чи илемлĕ шкула пайан никамран малтан килни çинчен, тата хăйĕн учителници илемлĕ куçлăх тăхăнни çинчен пĕлтерессшĕн пулнă.

Герă пайан хăйĕн йуратнă шкулĕнче питех нумай ачасем курнă. Вăл вĕсем çине шăтарас пек пăхса тĕлĕнсе тăнă. Вĕсем пурте унтан вăйлăрах пек туйăннă. Çавăнпа вăл пĕр сăмах та чĕнмен, вĕсене парăнса хăйне пултарайман ача вырăнне шутланă.

Шкулти урoксем кунсеренех çапла пĕр вăхăтра иртсе пынă. Анчах Герă вĕсемпе аран-аран çеç килĕштерсе пынă. Вăл, йепле пулсан та, хăйĕн маттурлăхне палăртасшăн пулнă, йаланах хăй вĕренекен илемлĕ шкулĕпе, вăл çак шкула пур ачасенчен малтан вĕренме килни çинчен мухтанма тăрăшнă. Çапла пулсан та, унăн ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕрсе пырайман. Шкулти аслăрах классенче вĕренекен ытти ачасем пурте пĕр пуç çÿлерех тăрса, хăйсене Герăран мăнкăмăллăрах тытнă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ, Герăн та вĕсене парăнмала пулнă, унăн ачасенчен хăйне уйăрмрах тытса çÿремеле пулнă.

Герă малтан пăшăрханса та пăхнă. Чи малтан çав аслăрах классенче вĕренекен ачасенĕ çиленерех панă.

— Ха, пăмăссăрсем, ахалех мухтанаççĕ. Кам килчĕ-ха çак шкула пуринчен малтан,—тесе вăл хăйĕн кĕвĕçекен кăмăлне лăплантарма тăрăшнă.

Анчах, унăн çапла тăрăшнисем сийенсĕр пуçне нимĕнле усă та паман, мĕншĕн тесен кунта чи малтан çитнипе мар, пуринчен те авăн вĕренсе пынипе мухтанмала пулнă.

Герă ăна-кăна ăнланман çав. Вăл йаланах переменăсенче хăйне пуринчен те маттур ача вырăнне кăтартма тăрăшнă. Çак шухăш унăн пуçĕнче ÿссе пынă май, унăн дисциплинĕ те чаксах пынă.

Пĕррехчен, Герă Рево йатлă ачапа тавлашмалипех тавлашса кайнă. Вĕсен тавлашĕвĕнчи тĕп ыйту — каллех, çак шкула пуринчен малтан кам килнĕ ыйтупах пулнă.

— Епĕ килнĕ,—тенĕ Герă.

— Çук, есĕ мар, епĕ килнĕ, — тенĕ Рево.

Йулашкинчен, Герă тарăхсах çитнĕ те, Ревона тĕртсе йарса урайне ÿкернĕ. Рево ыратнипе ыратманнине пăхмасăрах йĕрсе йанă.

Çакăн хыççăн пĕр класра вĕренекен ачасем Герăна пурте „усал ача" тесе чĕнме пуçланă.

Герă вăтам вĕренсе пыма пуçланă. Çапах та вăл вăтам вĕренсе пыракан ачасенчен айаларахри хисепсенче тăнă, мĕншĕн тесен ăна пурте „усал ача" тесе шутланă.

Анчах, Герă вăтам вĕренекен ачасенчен маларах тăма шутланă, мĕншĕн тесен вăл пени урокне пур ачасенчен те ытларах йуратнă, çак йенĕпе вăл пуринчен малта пынă.

Чи малтан ăна, хăй вĕренме килнĕ çĕнĕ шкулĕ пекех, пени учителĕ килĕшнĕ. Вăл учител питех тĕлĕнмеле те кулăшла етем пулнă. Çĕвĕлĕ йанахлăскер тата Герă пурăнакан хулара никам тăхăнман авалхи шĕвĕр тăрăлă çĕлĕкпе çÿрекенскер, пур ачасемшĕн те кулăшла етем пулнă.

Ăна ачасем питех кăмăлласах та кайман. Çапах та унăн урокне вĕсем тÿтлă кукăль парассине кĕтнĕ пекех кĕтсе илнĕ, мĕншĕн тесен вăл урока йаланах ухсахласа кĕрсе, çакă пуçĕнчи шĕвĕр çĕлĕкне сĕтел умне çитсен çеç хывса ачасене сыв сунна.

Çапла хăтланни ачасене çавнашкалах Герăна та килĕшмен. Анчах вĕсене урăххи кăмăла кайнă, ачасем унăн сĕркĕч купăсне ытларах килĕштернĕ.

Вăл ăна йаланах класа кĕнĕ чухне хăйĕн сулахай хулĕ хушшине хĕстерсе кĕнĕ. Ачасем вăл килессе малтанах кĕтсе тăнă пулсан та, ун çине çавăрăнса пăхман, вĕсен куçĕсем пурин те çав сĕркĕч купăс çинче пулнă.

Вăл йаланах класа кĕрсен, ачасене шăпрах ларма ыйтнă.

— Пени урокĕнче, йепле пулсан та, шăп ларма тăрăшмала—шăна вĕçни илтĕнмеле пултăр,—тесе хытарнă.

Çапла вăл пĕчĕк ачасене хăйĕн сĕркĕч купăсĕн хĕлĕх сассипе паллаштарнă. Çак тапхăр вара ачасемшĕн калама çук кулăшла пулнă. Ачасем унăн çине шăтарас пек пăхса, сĕркĕч купăс хĕлĕхĕн сассисене итлесе ларнă.

Ачасем çапла шăп ларни учител кăмăлне те кайнă. Вăл хăйĕн кивелме пуçланипе тĕссĕрленсе кайнă сĕркĕч купăсне çĕвĕлĕ йанахĕ айне хĕстерсе лартнă та, çара пуçне сула-сула вăрăм сĕркĕчипе калла-малла сăтăрнă, çапла вăл ачасене сасăсем тытма пулăшнă.

Анчах ачасем пĕрре те учител шухăшланă пек пулман—пурте вăл çапла кулăшла хăтланни çине тĕлĕнсе пăхса ларнă. Пĕр Герă кăна, çав сасăсене тытма тăрăшнă. Малтанхи хĕлĕхĕ ăна вилекен нăрă пек йайкăшнăн туйăннă, çавăнпа вăл ăна итлесшĕн те пулман. Иккĕмĕш хĕлĕхĕ кăштах паттăртараххăн сас кăларнă пек туйăннă, çапах та вăл ăна кăмăлламан, мĕншĕн тесен çак сасă унăн паттăрлăхĕпе танлашма пултарайман. Виççĕмĕш сасă вуçех урăхла пулнă. Çак самантра Герă пĕтĕм чĕрипе çĕкленсе ларнă, çак сасă унăн паттăрлăхĕнчен те иртсе кайма тăрăшнă.

Анчах Герă вăл сасса хăйĕнчен иртерсе йама шутламан. Вăл, йепле пулсан та, çав сасăран маларах тăрса, хăйĕн хулăм сасне кăтартасшăн пулнă.

Вăл чăнах та çаплах тунă. Пени учителĕ калама чарăннă та самантрах хăйĕн сĕркĕч купăсне май айĕнчен кăларса илсе, вăрăм сĕркĕчипе тепĕр йенчен шакканă, унтан хыткан аллисене çĕклесе йурлама паллă тунă.

Герă малтан, хăйĕн сарлака кăкăрне мĕн чухлĕ кĕнĕ, çавăн чухлĕ сывлăш тултарса илнĕ те, пуринчен малтан йурлама пуçланă, вăл кашни сыпăкри сассах уççăн кăларса пынă. Çапла унăн сассине учител те аванах сăнаса илнĕ.

— Герă,—тенĕ вăл йурласа пĕтерсен.—Есĕ, урок хыççăн ман пата йул-ха,—тесе ыйтнă вăл унтан.

Çакăн хыççăн ачасем тĕлĕнсех кайнă. Хăшĕсем ăна пĕлменнишĕн йулма хушрĕ тесе шухăшланă, теприсем тата урăххишĕн хăварат пулĕ, тенĕ. Çапах та нумайĕшĕ, Герăна йурлама пĕлменнишĕнех хăварат пулĕ, тесе шухăшланă.

Анчах Герă вĕсем çине çаврăнса та пăхман. Вăл урок хыççăн учител патне йулнă та, унăн сăмахĕсене тимлĕн итлесе ларнă. Çак вăхăтра вăл çĕнĕ шкула вĕренме пуринчен малтан хăй килни çинчен те мансах кайнă. Пени учителĕ унăн сассине ырласа, ăна малашне татах та авăн тăрăшса йурлама ыйтнă.

Нумайах та иртмен вăхăт, Герă пенипе „отлично" илнĕ. Çакă унăн пĕрремĕш „отлично" пулнă. Çакăн хыççăн вăл пур предметсем тăрăх та тăрăшса вĕренме пуçланă. Часах, вăл ытти предметсем тăрăх та отлично илме пуçланă.

Хальхи вăхăтра Герă пур предметсемпе те отлично вĕренсе пырат. Вăл халĕ, çак шкула вĕренме чи малтан çитнишĕн мар, шкулта пур ачасенчен те малта вĕренсе пынишĕн савăнса мухтанат.

Тĕп саккуна пăсакан постановленисене хирĕç

Райĕçтăвкомсем тĕрлĕрен ыйтусем тăрăх постановленисем кăларнă чухне тĕп саккунсене асра тытмаççĕ, манаççĕ. Çавăнпа та час-часах вĕсен йатарласа кăларнă постановленисем тĕп саккуна пăсаççĕ, демократийе, ĕçсыннисен интересĕсене, прависене хĕсеççĕ. Çитменнине тата, вăл постановленисенче грамматикăлă йăнăшсем нумай пирки, вĕсене ăнланма йавăр. Постановленисем кăларас ĕçри çак пысăк çитменлĕхсемпе чылай районсенче пайан кун та тивĕçлипех кĕрешмеççĕ-ха. Уйрăмăнах çак обйазателлăй йĕркепе кăларакан постановленисене пур йенчен те тĕп саккуна килĕшӳлĕ, тĕрĕс тăвасси — политикăла ыйту пулса тăнине Сĕнтĕрвăрри, Канаш, Улатăр тата Ишлей райĕçтăвкомĕсем ăнланса илмен-ха.

Вĕсем постановленисем кăларнă чухне выранти ĕçтăвакан комитетсем обйазателлăй йĕркепе постановленисем кăлармали Положенине пăхăнмаççĕ, ăна пăсаççĕ. Обйазателлăй постановленисене пурне те выранти хаçатра пичетлесе кăлармала, анчах вĕсем ун çинчен аса илмеççĕ. Çавăн пек постановленисене йышăничченех малтан секцисенче, актив пухувĕсенче сӳтсе-йавмала, анчах вĕсем каллех кун çинчен те манса кайнă. Обйазателлăй йĕркепе постановленисем кăлармали Положенин 12-мĕш статйинче обйазателлăй постановленине йышăнса кăларнă кунран пуçласа 15 кун иртсен пурнăçа кĕртме тытăнмала, тенĕ. Райĕçтăвкомсем çакна пăхăнмаççĕ, вĕсем обйазателлăй постановленисене йышăннă кунах пурнăçа кĕртме тытăнмала, тесе йышăнаççĕ.

Обйазателлăй йĕркепе постановлени кăларма пройект хатĕрлес, вăл постановленисене вырансенче пурнăçа мĕнле кĕртнине сăнаса пырас ĕçсене чылай çĕрте райĕçтăвком председателĕ мар, инструкторсем, райĕçтăвкомăн ытти работникĕсем тăваççĕ.

Чылай райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсем çумĕнче администрацине права комиссийĕсем туман, хăшпĕр районсенче адмкомиссисем хăйсен ĕçĕсемпе задачисене çителĕклĕ таран ăнлăн — ăнланмаççĕ. Вĕсем обйазателлăй йĕркепе кăларнă постановленисене пăсакансем çине штраф хурасси—тĕп ĕç, тесе шутлаççĕ. Ку вăл тĕрĕс мар.

Çавăн пекех хăшпĕр райĕçтăвкомсем хăйсем те обйазателлăй йĕркепе кăларнă постановленинче кăтартнă йĕркесене халăх хушшине çитерессишĕн çине тăрсах тăрăшас выранне, вăл постановленисене пурнăçа кĕртессинче штрафсем хурас тата ытти тĕрлĕ майсемпе айăплас меслетсемпе ытларах усă курма тăрăшаççĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕ чылай райĕçтăвкомсен обйазателлăй йĕркепе кăларнă постановленийĕсене—вĕсем саккуна килĕшӳлĕ мар, тĕрĕс мар, пулса тăнине кура, пăрахăçа кăларнă. Анчах çав райĕçтăвкомсем, сăмахран, Сĕнтĕрвăрри, Улатăр, Канаш райĕçтăвкомĕсемпе хула совечĕсем „Тĕпĕçтăвкомĕ вĕсен йанăш постановленийĕсем çине кăтартса панă хыççăн, çав постановленисене пăрахăçа кăлармала, тесе йышăннисĕр пуçне, урăх нимĕнле вывăд та туман.

Райĕçтăвкомсенче обйазателлăй йĕркепе постановленисем кăларас ĕçе тепĕр кут тĕрĕслесе тухнă хыççăн, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Президиумĕ хăйĕн 1938 ç. йанварĕн 5-мĕшĕнче пулнă ларуйĕнче ку ĕçе халĕ те çителĕклĕ мар, кирлĕ пек йĕркелемен, тесе палăртса хăварчĕ.

Тĕрĕсленĕ хыççăн акă мĕн палăрнă: Трак районĕнче 1936 çулта райĕçтăвком обйазателлăй йĕркепе „кашни килĕн 300 центнершер кĕл пухмала, ăна пăхăнмасан çĕре туртса илмеле“, тесе йышăннă постановленине халĕ те пăрахăçа кăларман.

Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвкомĕ 1936 çулта, декабĕрĕн 15-мĕшĕнче обйазателлăй йĕркепе постановлени йышăннă. Вăл постановленин 5-мĕш пунктĕнче хулари тата йалти çынсене „уйăхра виçĕ хутран кайа мар мунча кĕме тата кĕпе-йĕм улăштарма“ хушат. Çакна пурнăçа кĕртмен çынсене 100 тенкĕ таран штраф тӳлеттермеле йе пĕр уйăх йусанмали ĕçре ĕçлеттермеле, тенĕ çак обйазателлă йĕркепе йышăннă постановленире. Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвкомĕ çакна пайан кун та пăрахăçа кăларман.

1937 çулта иккĕмĕш кварталта Сĕнтĕрвăрри хулинче обйазателлăй постановленисене пăхăнманнийăн сахал мар штрафланă, пĕтĕмпе 2376 тенкĕлĕх штраф хунă. Шыраса илесси мĕн пурĕ те 255 тенкĕ кăна шыраса илнĕ.

Патăрйел районĕнче райĕçтăвком обйазателлăй йĕркепе йышăннă постановлени тăрăх, граждансен килкартисенче тиçлĕк тытма йурамаст мĕн.

Вăрмар районĕнче райĕçтăвком хăйĕн обйазателлăй постановленийĕпе килçуртсене уламла витме чармала тунă.

Райĕçтăвком постановленийĕ тăрăх, Шăмăршă районĕнче каçхине 9 сехет иртсен килсенче вут хутма йурамаст; Улатăр районĕнче каçхине 9 сехет иртсен, ирхине 7 сехетчен вут хутма йурамаст.

Саккуна пăсса обйазателлăй постановленисем йышăнни ытти районсенче те пур. Паллах ĕнтĕ, çавăн пек киревсĕр постановленисем сийен кӳнисемсĕр пуçне урăх нимĕн те пама пултараймаи. Çавăн йышши постановленисем совет саккунĕн авторитетне ӳкереççĕ, халăх тăшманĕсем ваљљи совета хирĕçле агитаци тумали материал пулса тăраççĕ.

Прокуратурăсен райĕçтăвкомсем, хула совечĕсем, йалсовечĕсем кăларнă постановленисем саккунпа килĕшӳлипе килĕшӳлĕ маррине сăнаса пымала, вĕсем ун çинчен аса та илмеççĕ. Райĕçтăвкомсем революцилĕ саккунлăха пăсса постановленисем кăларнине районри прокурорсем чылай чухне асăрхамасăр йулаççĕ, тĕрĕс мар йышăнусене хирĕçлемеççĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕн инструкторĕсем те выранти советсене ку тĕлĕшпе çителĕклĕ пулăшман.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком президиумĕ 1938 ç. йанварĕн 5-мĕшĕнче пулнă ларура обйазателлăй йĕркепе постановленисем кăларас ĕçе йĕркелесси пирки татăклă кăтарту пачĕ. Обйазателлăй йĕркепе постановленисем кăларма пройект хатĕрлесе сӳтсе-йавас ĕçе секци членĕсене хутшăнтармала, обйазателлăй йĕркепе кăларнă постановленисем—массăна вĕрентекен постановленисем пулса тăмала. Вăл постановленисем халăх пурнăçне татах та лайăхлатма, советсен ĕçне вăйлатма, массăна совет саккунлăхне ăнланса илме пулăшчĕр.

Райĕçтăвкомсен, хула совечĕсен тата йалсовечĕсен обйазателлăй йĕркепе постановленисем кăларнă чухне, çаксем çинчен лайăх асра тытмала.

ПРОНИН.

Куславкка комбинатĕнчи комсомолкă-стахановкăсем: 1) Анна Мошкова—комбинатра 1932 çултанпа ĕçлет; 2) Анна Комагина—топкă бригадирĕ. Вĕсем йаланах нормăна иртерсе тултараççĕ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Займ укçи пухассипе тивĕçлĕ хăвăртлăх

КӲКЕÇ. Йанварĕн 12-мĕшĕнче займ уполномоченнăйĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу районра укçа-тенкĕ пухас ĕç мĕнле тăни çинчен райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Виноградов йулташăн докладне итлерĕ, ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарĕ Чубарь йулташ пур финанс работникĕсене те чĕнсе каланине сӳтсе йаврĕ.

Канашлу районра укçа-тенкĕ пухас ĕç начар пынине палăртрĕ. IV-мĕш квартал планне 76 процент çеç тултарнă. Уйрăмăнах займ укçи пухас ĕç начар—плана 41,3 процент кăна тултарнă. Займ укçи пухас тĕлĕшпе Сарапакасси, Шĕнерпуç, Иккасси, Шуркка, Шемшер йалсовечĕсем йулса пыраççĕ. Вĕсем плана 12 процентран мала тултарман. Буденный йачĕпе тăракан колхозра, Ворошилов йачĕпе тăракан колхозра, Крупскайа йачĕпе тăракан колхозра, „Туçи“, „Труд“, „Путь Ленина“ колхозсенче колхозниксемпе йединоличниксене „Оборонă займне“ çырăнтарнă та, укçине пĕр пус та пухман.

Займ укçи пухăнманни йалсовечĕсем ку ĕçе займ уполномоченнăйĕсене çеç шанса парса, вĕсене пулăшса пыманнинчен тата нумай çĕрте займ уполномоченнăйĕсене шанчăксăр çынсене лартса тухнинчен килнĕ. Шорчакасси йалсоветне кĕрекен „Пионер“ колхозĕнчи Иванов Николай, Корнилов, „Красная Армия“ колхозĕнчи Иванов Григорий, „Красное знамя“ колхозĕнчи Агеносов Йаким, Игнатйев Йегор, „Шăнкас“ колхозĕнчи Василйев Григорий займ уполномоченнăйĕсем хăйсем те пĕр пуслăх та займ çырăнман. Çапах та вĕсене çакăн пек ответлă ĕçе шанса панă.

Шĕнерпуç йалсоветĕнчи Филиппов, Йемелйанов, Родионов, Артемйев, „Чемпек“ колхозри Йегоров, „Заря“ колхозри Петров, Ворошилов йачĕпе тăракан колхозри Кириллов займ уполномоченнăйĕсем хăйсем займ укçине пĕр пус та тӳлемен. Буденный йачĕпе тăракан колхозри колхозниксем займ уполномоченнăйĕ камне те пĕлмеççĕ. „Пчела“ колхозĕнчи займ уполномоченнăйĕ Иванов колхозниксенчен пухнă займ укçине 240 тенкĕ пытарса хăварма шухăшланă, Шаккăлти промколхоз бухгалтерĕ Сергейев колхозниксенчен пухнă займ укçине 215 тенкĕ хăй çумне чикнĕ.

Шанчăксăр, авторитетсăр, ĕçлеме пултарман çынсене займ уполномоченнăйĕсем туса лартнă çĕрте тата займ уполномоченнăйĕсем йал активĕпе пĕрлешсе ĕçлемен çĕрте займ укçи пухас ĕç йапăх пырат.

Лайăх ĕçлекен займ уполномоченнăйĕсем те сахал мар. Вĕсем хăйсем тавра пĕтĕм йал активне йавăçтарса колхозниксем хушшинче агитацилĕ массălă ĕçе анлăн сарса йанă, „Оборонă займĕ“ çинчен кашни колхознике ăнлантарнă. Акă вĕсем: Йаковлев—Каганович йачĕпе тăракан колхозран, Володин—„Красный флот“ колхозран, Димитрийева—„Дружба“ колхозран, Леонтйев—Молотов йачĕпе тăракан колхозран. Çак колхозсенче займ çырăнса илнĕ, укçисене пĕтĕмпех парса татнă. „Красный флот“ колхоз членĕсем 27090 тенкĕлĕх займ çырăнса укçине тӳлесе татнă, займ облигацисене алла илнĕ. Çав вăхăтрах вĕсем укçа-тенкĕ тĕлĕшпе государствă умĕнчи ытти парăмĕсене те пĕтĕмпех парса татнă. „Красный флот“ колхозĕ Молотов йачĕпе тăракан колхозпа ăмăртса ĕçлесе, займ укçисене пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Унтан, канашлува пухăннисем Чубарь йулташ чĕнсе каланине ырласа, февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне займ укçине пĕтĕмпех тӳлесе татма обйазателствă пачĕç. Хăйсем çине илнĕ обйазателства çинчен ССР Союзĕн Аслă Совет Çессине Чăваш республикинчи депутатсем патне телеграммă йачĕç.

Çавăн пекех канашлу февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне займ укçине тӳлесе татма хамăр республикăри ытти районсене те чĕнме йышăнчĕ. Займ уполномоченнăйĕсен составне пăхса тухма хушса хăварчĕ.

Унтан лайăх ĕçлекен займ уполномоченнăйĕсене: Володина, („Кр. флот“)—50 тенкĕ, Димитрийевăна („Дружба“)—75 тенкĕ, Йаковлева (Каганович йачĕпе тăракан колхоз)—50 тенкĕ, Леонтйева (Молотов йачĕпе тăракан колхоз)—70 тенкĕ укçа парса премилерĕç.

Тр. Логинов.

Хаçатсене пăхса тухни вырăнне

„Ударник“ хаçат мĕншĕн çăвара шыв сыпнă?

Партин Сĕнтĕрвăрри районĕнчи организацинче халăх тăшманĕсем: троцкисла-бухаринла бандитсемпе буржуалă националиссем чылай пулнă. Вĕсем хуçалăхпа културă строителствинче сăтăрла ĕçсем туса пынă. Районти парти руководстви (райкомăн пĕрремĕш секретарĕ пулнă А. С. Степанов, иккĕмĕш секретарĕ пулнă Г. Шипунов) ПСК(б)П Тĕпкомĕн февралĕпе мартри пленумĕн решенисенчен, Сталин йулташ кăтартса панисенчен тата партин Чăваш организацин XVIII-мĕш конференци решенисенчен хăйне валљи политикăла выводсем туман. Партилĕ-массăлă ĕçе урăхлатса ĕçнетмен, райком коммуниссенчен, партире тăман активран уйăрăлса кайнă. Парторганизаци ӳсме чарăннă. 1937 çулта икĕ çынна çеç парти членĕн кандидатне илнĕ. Парти кружокĕсем ĕçлемен. Районти коммуниссене райком уполномоченнăйĕсем туса хунă. Райком секретарĕсен йертсе пырас меслечĕ: кăшкăрса, йатласа тăкасси, хăратасси, самокритикăна хĕсесси пулнă.

Кадрсене семйелĕхе кура ĕçе лартнă. Буржуалă-националис Йевграфова райкомăн ревизи комиссi председателĕ пулма Степанов пулăшнă. Торг директорĕ Хирбиков преступлени тунине кура тăркачах, Степановпа Шипунов ăна пулăшса тăнă.

Паллах ĕнтĕ, лару-тăру çакăн пек пулнă чухне парторганизаци болшевикла сыхă тăма пултарайман. Райком членĕсем хушшинче те тăшманла етемсем чылайах пулнă. Çав тăшмансен совета хирĕçле ĕçĕсем çинчен (Д. К. Кузьмин, Йевграфов, Глухова т. ыт.) райкомра сигналсем пулнă. Вĕсем çинчен хăй вăхăтĕнче „Чăваш Коммунĕ“ хаçатра та çырнă. Анчах райком çав тăщмансен ĕçĕсене пăхса тухассине йури вăрăмласа пынă.

Районри парторганизацинче çак нашкал киревсĕр ĕçсем пулса пынă вăхăтра районри „Ударник“ хаçат мĕн тунă? „Ударник“ халăх тăшманĕсем çине либералла пăхнă. Иртнĕ çулти октябĕр уйăхĕнчех „Чăваш Коммунĕ“ хаçат: „Ударник“ хаçат самокритикăна сарас тăшмансене тăпăлтарса пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туманни çинчен кăтартнăччĕ.

Хаçатăн хăйĕн йанăшне тӳрлетме вăхăт пулнă. Анчах хаçат ку таранччен те хăйĕн йанăшне тӳрлетмест. Хаçат парти ретне ултавлă майпа хĕсĕнсе кĕнĕ тăшмансене тупса палăртас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Райком секретарĕсем тăшмансене хӳтлени çинчен те хаçат çăвара шыв сыпса ларнă. „Ударник“ хаçат парти организацинчи çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларас выранне, вĕсене витсе пырас çул çине тăнă. Иртнĕ çулти декабĕрĕн 26—27 мĕшĕсенче районри коммуниссен пухувĕ пулса иртнĕ, Пухура райком руководствине улăштарнă, халăх тăшманĕсем (Кузьмин, Йевграфов т. ыт.) тунă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтересси çинчен нумай каланă.

Анчах „Ударник“ хаçат çак пуху иртни, пуху мĕнле решени йышăнни çинчен 15 кун иртсен тин çырса пĕлтерет. 15 кун хушши çырнă материалра та райĕçтăвком председателĕ пулнă Кузьминăн тăшманла ĕçĕсем çинчен, ăна Степановпа Шипунов хӳтлени çинчен çырса пĕлтерме хăйулăх тупайман хаçат. Парти пухувĕ çинчен материала чĕтрекен алăпа çырни куç умĕнчех. Çак ĕçсемшĕн „Ударник“ хаçат хăй те айăплине сисет.

„Ударник“ хаçат 1937 çул тăршшĕпех районри парторганизаци руководствин çитменлĕхĕсене пытарса пынă. Çавăнпа та вăл хăйулăн çăвар уçса калама шикленет.

Хаçатăн тăшмансене: троцкисла-бухаринла бандитсене, буржуалă-националиссене, вĕсене пулăшакансене нимĕн хăвармиччен тăпăлтарса пĕтермеле. Парторганизаци аллинче чи çивĕч те вăйлă хĕçпăшал пулмала. Çитменлĕхсене массăран пытармала мар, вĕсене хăйулăн критиклемеле.

„Ударник“ хаçат халĕ çаксене тумаст, тăвасшăн та мар. Çакă пире хаçат редакторĕн, Мелников йулташăн, политикăла сăнпичĕ пирки хытă иккелентерет.

Йулашки почтăран

Тимсĕр хаçатсем

Йанварĕн 12-мĕшĕнче ССР Союзĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕ уçăлчĕ. Ку кун социалисăмла аслă çĕршыври нумай мĕлйунлă халăхсен чаплă уйав кунĕ пулса тăчĕ. Тĕнчери чи демократилĕ Конституципе Суйлав саккунĕ тăрăх пĕтĕм халăх суйланă Совет парламенчĕ ĕçе тытăнчĕ.

Турхан районĕнчи „Коммунар“, Тутаркас районĕнчи „Ĕç йалавĕ“, Çĕрпӳ районĕнчи „Колхоз çулĕпе“ хаçатсен 1938 çулти йанварĕн 12-мĕшĕнче тухнă номĕрсенче ССР Союзĕн Аслă Совечĕн Пĕрремĕш Çессийĕ уçăлассийĕ çинчен пĕр сăмах та çырман.

Мĕн сăлтавпа çав хаçатсен редакторĕсем çав тери тимсĕр пулса, Çессийĕ уçăлни çинчен халăха çырса пĕлтермеççĕ?

Тĕне хирĕçле ĕçĕн агитаторĕсем

Иртнĕ çулсенче Трак районĕнче тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци ĕçĕ питĕ начар тăнă. Тĕне хирĕç ĕçлекен пропагандиссемпе агитаторсем пулман, Вăрçăлă турăсăрсен йачейкисем ĕçлемен.

Парти райкомĕ йулашки вăхăтра тĕне хирĕç ĕçлекен агитаторсен йышне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнчĕ. Парти райкомĕ районти центăртан йалсенчи турăсăрсен организацисене пулăшма, тĕне хирĕç пропагандăна вăйлатма 26 çынна йала йачĕ. Вĕсем чи малтан тĕне хирĕç агитаторсен кадăрне пухас, турăсăрсен пуçламĕш организацисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлерĕç.

Йалсенче тĕне хирĕç агитаторсем пур. Анчах вĕсен пĕлӳ тата ĕçри опыт сахал.

Çакна шута илсе, парти райкомĕ тĕне хирĕç агитаторсен 15 кунлăх курсне туса иртерчĕ. Курсра 22 агитатор вĕренсе тухрĕç.

Курсра вĕренекенсем йанварĕн 5—7-мĕшĕсенче йалсенче пулчĕç. Вĕсене парти райкомĕ халăх хушшинче тĕне хирĕç агитацине мĕнле иртермелине кăтартса конкретлă план туса пачĕ. Йала кайнă агитаторсем хăйсене хушнă ĕçсене нумайĕшĕ лайăх туса иртерчĕç. Агитатор Терентйев йулташ виçĕ йалта турăсăрсен йачейки организациленĕ. Вĕсенче 27 çын члента тăрат. Йалти активпа пĕрле колхозниксен пухуне туса иртерпĕ, унта тĕн сĕрĕмĕн сийенĕ çинчен доклад туса панă. Пухусенче 655 çын пулнă, çакă вăл колхозниксем тĕне хирĕç пропагандăпа питĕ хытă интересленнине лайăх кăтартса парат.

Курсра вĕренекенсен вăйĕпех çак вăхăтра сĕнĕрен турăсăрсен йачейкисем 21 йалта организациленĕ, сĕнĕрен 368 çынна члена йавăçтарнă. Агитаторсем туса иртернĕ пухусемпе калаçусенче пурĕ 3000 çын ытла пулнă.

Тĕне хирĕç ĕçе колхозник-старниксем хутшăнаççĕ. Буденный йачĕпе тăракан колхозри 75 çулхи старик Архипов йулташ колхозниксен пухувĕнче ĕлĕк пуп хресченсенчен мĕнле мăшкăлани çинчен, халăха улталани çинчен каласа панĕ. Хресченсем пупа тырă парасшăн пулман, çак ĕçре Архипов активлă ĕçленĕ. Çакăн çинчен пуп урйаднике пĕлтернĕ те, Архипова старăстăпа пырса илсе кайнă, хĕнесе пĕтернĕ.

„Сталь“ колхозри ватă колхозниксем, Артемйевпа Куçмин йулташсем, тĕн сĕрĕмĕ çинчен колхозниксене каласа ăнлантарнă. Тĕне хирĕç ĕçе вăйлатма тытăнсан ку ĕçре чăрмавсем те тĕл пулчĕç. Вулав сӳрчĕсенче, хĕрлĕ кĕтессенче, библиотекăсенче тĕне хирĕç литературă çук. Тĕрĕсленĕ 16 вулав сӳртĕнче тĕне хирĕç кĕнекесем 3—4 ытла пулман. Кунтан ĕнтĕ йала тĕне хирĕç литературă сарас ыйту çивĕччĕн тухса тăрат. Суту-илӳ организацисем те йала тĕне хирĕç плакатсем, кĕнекесем сарас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Ĕç тытăнни çеç кирлĕ, вăра тĕне хирĕç агитаторсем те тупăнаççĕ. Халĕ сĕнĕрен пала нă агитаторсем тĕне хирĕç агитаци ĕçне тытăнчĕç. Ку ĕçĕн пуçламăшĕ çеç. Тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци ĕçне вăйлатасси пирĕн ĕç.

ПСК(б)П Трак райкомĕн секретарĕ **Г. Закамский.**

Тĕне хирĕç вечĕр

Йанварĕн 6-мĕшĕнче, каçхине, Кив Шулханта (Вăрмар р.) çамрăксен вечĕрĕ пулчĕ. Вечĕрта тĕн сийенĕ çинчен Василйев йулташ доклад туса пачĕ. Доклада çамрăксем пысăк интереспа итлерĕç. Çак вечĕртах ВТС организаципе ПВХО кружокне организацилерĕç.

В. Григорйев.

Кирлĕ таварсем çук

Хĕрлĕ Чутайри кĕнеке магазинĕнче нихăçан та кирлĕ таварсене вăхăтра сутни çук. Халĕ кашни кунах йалсенчен килнĕ çынсем календарсем, численниксем ыйтаççĕ. Анчах вĕсене илсе пырса сутас пирки магазинра ĕçлекенсем нимĕн те тумаççĕ.

В. Степанов.

Кĕвĕсен ăсти

ПАТĂРЙЕЛ. (Хамăр корр.). Çатмăш йалĕнчи Николай Йагудин Кĕçĕн Çĕрпӳ йалĕнчи вăтам шкулăн 7-мĕш класра вĕренет. Çак çамрăк ача хăйĕн пысăк талантне кăтарат, вăл балалайкă çинче 150 кĕвĕ ытла вылјама вĕреннĕ. Йагудин отлично вĕренет, шкулти тĕрлĕрен кружоксенче хастарлă хутшăнса ĕçлет.

Илйинкă шкулĕнче вĕренекен хăшпĕр ачасем, вĕсен ашшĕсем тата „йур çинче утă туса илекенсем“ çинчен

„Тут многое зависит и от родителей. Если мамаша занимается еще кое-как детьми, то папаша не знает даже порой, кто когда родился, кому сколько лет. У нас бывает так, что ребенок неделями не ходит в школу, а родители узнают об этом лишь через полтора-два месяца. Нужно взять ребят в руки, сделать так, чтобы класс был похож на класс“.

С. М. Киров.

I.

—Ывăлăм, пайан шкула кайатăн-и?—ыйтрĕ амăшĕ 15 çулхи ачинчен.

— Каймастăп, пайан вĕрентмеççĕ!—ответлерĕ ывăлĕ амăшĕ кăмăллăн ыйтнине хирĕç.

— Вĕрентмеççĕ...—Хутшăнчĕ кунта ашшĕ те.

* * *

Илйинкă. Тĕрлĕ йалти колхозниксем хулленхи пекех Атăл лешйенчен утă турттараççĕ. Утă тийенĕ лавсем Илйинкă витĕр нумайăн иртеççĕ. Лав хыççăн лав, лавсем хыççăн ача та качака—пĕр йетӳ. Качакисем сухалĕсемпе кăна, ачисем вара çунашкасемпе, креплесемпе... Лавсем патне чупса çитеççĕ те креплесемпе утă туртса илеççĕ. Сĕклемĕн-сĕклемĕн йăтса чупаççĕ.

...Акă пĕрисем хăйсен çунашкисем çитаптасех утă тийенĕ те Илйинкă урамне, йалсовечĕ умĕнчен иртсе пыраççĕ.

—Икĕ пăт пухтомах пур!—тет малтиракане.

— Ытла та пулĕ... — тет хыçалтан йексе пыраканĕ.

Вĕсем хыççăн теприсем иртеççĕ. Унтан тата...

Илйинкă çынни Кобылин вĕсене пĕтĕм чунтан хавасланса кĕтет. Акă ĕнтĕ çитрĕç. кĕтнĕ „туссем“.

— Икĕ пăт...

— Пăт çурă...

— Пĕр пăт...

—Пăт...

Кобылинăн утă нумайлансах пырат.

— Ыран каллех килĕр,—чĕнет Кобылин.

— Килетпĕр...

* * *

— Ывăлăм, ыран шкула кайатăн-и?—татах ыйтрĕ амăшĕ ачинчен.

— Каймастăп, ыран та вĕрентмеççĕ...

— Вĕрентмеççĕ...—Хутшăнчĕ ашшĕ те.

II.

Çакă вăл пĕтĕмĕшле йала мар. Ăна Илйинкăра (Тутаркас р.) çеç курма пулат. Анчах Илйинкăри тата унăн тавралăхĕнчи йал çыннисем ку йапалана асăрхамаççĕ. Асăрхасан та кула-кула:

— Пирĕннисем йеппе пĕчĕклех утă турттараççĕ,—тесе хураççĕ.

Чăнах та, ку ĕç пайан пуçланнă йапала мар. Хăшпĕрисем ачи-пăчисене ку ĕçе йатарласах вĕрентеççĕ. Уйрăмах кунта Табакасси йалĕ „паллă“ выран йышăнса тăрат.

...Кĕркунне. Ачасем шкула çӳреме тытăннă. Илйинкă шкулĕнче вĕренӳ ĕçĕ организациленсе çитнĕ. Учителсем выранта. Вĕренекенсем те çителĕклĕ. 6-мĕшпе 7-мĕш классем хушшинче социалисăмлă ăмăрту договорне çирĕплетеççĕ. Табакасси ачи Волков Гаин сиксе тăрат те:

— Епĕ шкула 100 процентпех çӳреме сăмах пама пултараймастăп, манран 50 процент та çитет!—тет.

—Мĕншĕн?—ыйтма пуçларĕç учителсемпе ăстăнлă та йĕркелĕ вĕренекенсем.

— Мĕншĕн... А-а-а... хĕлле манăн утă пуçтарма каймала пулат, — ответлерĕ Гаин.

Учителсем, тĕрĕссипе каласан, Гаина ăнланаймарĕç: Мĕншĕн пысăккисем каймаççĕ? Мĕншĕн ачана вĕренӳ ĕçĕнчен уйăрмала?..

Хĕл çитрĕ. Атăл ларчĕ. Сулсем йусанса çитрĕç. Акă колхозниксем хĕрсе Атăл лешйенчен утă турттараççĕ. Хăйхи Волков Гаин та утă „пуçтарат“. Унпа пĕрле унăн пиччĕшĕ Волков Валерий. Ашшĕ анчах çук: вăл хăйĕн ачисен пек ĕçĕсемшĕн йусанмали çуртра йусанат.

Волковсемпе пĕрле, 6 кун шкула çӳремесĕр, Кошкин Иван, Кошкин Алексей, Кошкина Йелизавета—„ĕçлеççĕ“.

Табакасси колхоз счетоводĕн Данилов Ф. Д. хĕрĕсем—Аннапа Марийа, декабĕрĕн 19-мĕшĕнче, иккĕшĕ те шкула каймасăр, каçчен утă пуçтарчĕç.

Çапла „утă йур çинчех пуçтарса илеççĕ“ Табакасси ачисем. Çапла сĕмĕреççĕ вĕсем шкул дисциплинине, вĕсемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕсем те çавнах тăваççĕ.

III.

Камсем айăплă-ха кунта?

Пĕрремĕшĕнчен, ашшĕ-амăшĕсем айăплă. Мĕншĕн тесен, ашшĕ-амăшĕсем вĕсен ачисем утă вăрласа сутнине лайăх пĕлеççĕ. Çапла вĕсем хăйсен ачисем шкула çӳременнине те пĕлсе тăраççĕ. Ку çитмен-ха, хăшпĕрисем çакăн çинчен учителсем каласа парсан, сиххенме те пăхаççĕ. Илйинкăри шкул кăçал пĕр кун та ĕçлемесĕр ларман. Анчах шкула йĕркелĕн çӳремен ачасен ашшĕ-амăшĕсем: пирĕн ачасем шкула кайман кун шкул ĕçлемест, теççĕ пулмала. Çук, апла мар: шкул ĕçлет, шкула йĕркелĕ пыман ачасем шкул дисциплинине сĕмĕреççĕ. Ашшĕ-амăшĕсем вĕсене пулăшаççĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, çак ĕçе тума хĕтĕртекен çынсем айăплă. Илйинкă çынни, Кобылин хушаматлăскер, акă ĕнтĕ мĕн Атăл ларнăранпах çавăн пек утăсене илсе пурăнат. Тӳрех калас пулат, вăл хăйĕн ĕçĕпе ачасене илĕртсе, пĕр йенчен шкул ĕçне пăсат, тепĕр йенчен, ачасене преступлени тума вĕрентет, обществăна хирĕçле ĕç тăват.

Илйинкă йалсоветне Кобылин çинчен жалăбă та панă ĕнтĕ. Анчах йалсоветра ĕçлекенсем Кобылин ĕçĕ çине пăхса:

— Кобылин çул çинчен пухнă утăпах хĕл каçат... — тесе хăйсене хăйсем йăпатса лараççĕ.

IV.

Илйинкă шкулĕнче декабĕр уйăхĕн хăшпĕр кунĕсенче вĕренекенсем шкула çӳрени 72—79 процент пулнă. Шкула тивĕçлипе çӳремен ачасем çинчен Илйинкă йалсоветне пĕрре кăна мар пĕлтернĕ. Анчах Илйинкă йалсовечĕ шкула пулăшмаст.

Кунсăр пуçне тата, Шашкар йалсоветне кĕрекен йалсенчи ачасем (вĕсем 20 йахăн), шкула 3—4 уйăх хушши çӳремеççĕ. Шашкар йалсоветне кун çинчен пĕлтернĕ кăна мар, унта учителсем хăйсем те кайнă. Ку ыйтăва йалсовет хăйĕн пленумĕнче те лартанçи тунă, анчах пленум нимĕнле решени те йышăнман, пакăлтатнипе çеç иртерсе йанă.

Çак йалсоветĕнче ĕçлекенсем шутланă тăрăх, шкула йĕркелĕн çӳремен ачасене учителсен хăйсен пухса çӳремеле. Учителсене йатлама çук, вĕсем халĕ те, шкулта ачасене 5—6 сехет хушши вĕрентнĕ хыççăн, 4—5 километрти йалсене кайса çӳреççĕ. Пулăшмала-и вĕсене? —Паллах, пулăшмала. Хутпĕлменлĕхе ӳстермеле мар. Шкула куллен кун пулăшса пымала. Ку кашни ăстăнлă гражданинăн ĕçĕ, кашни учител ĕçĕ, ачасен ашшĕ-амăшĕсен ĕçĕ, çав вăхăтрах вăл йалсоветсен ĕçĕ.

В. Хударсем.

Колхозниксем хӑйсен депутачӗ патне йанӑ ҫыру

АРЗАМАС, 14-I (ТАСС). ССР Союзӗн Аслӑ Совет Ҫессийӗ уҫӑлнӑ йатпа пухӑннӑ пухува „Привет“ йатлӑ йалхуҫалӑх ертелӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем 400 ҫынна йахӑр пухӑннӑ. Пуху хӑйсен ССР Союз Аслӑ Совет депутачӗ Иван Йаковлевич Лаврушин патне ҫыру йама йышӑннӑ. Колхозниксем ҫапла ҫыраҫҫӗ:

—Хаклӑ Иван Йаковлевич! Ҫеҫҫи уҫӑлнӑ тӗле епӗр производствӑра ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем турӑмӑр,—сире ҫавӑн ҫинчен саламласа пӗлтеретпӗр. Епӗр уйа торф тата тислӗк турттарас плана иртерсе тултартӑмӑр, йалхуҫалӑх машинисемпе ӗҫхатӗрӗсене йусаса пӗтертӗмӗр, вӑрлӑхсене кирлӗ чухлӗ хывса суртласа хутӑмӑр.

ССР Союз Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫеҫҫийӗ уҫӑлнӑ йатпа пирӗн колхозра стахановла звеносем вунултӑ тата пӗр стахановла бригадӑ организациленӗ. Епӗр хамӑр умма кӑҫалхи ҫул гектартан 110 пӑтран кайа мар тӗштырӑ туса илес задачӑ лартрӑмӑр. Ҫеҫҫи ӗҫленӗ кунсенче ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе стахановла ӗҫлес, тесе йышӑнтӑмӑр.

Сире, хамӑрӑн депутата, колхозлӑ наказ паратпӑр: пирӗн ҫулпуҫне тата учителе Аслӑ Сталин йулташа телейлӗ те хаваслӑ пурнӑҫшӑн колхозлӑ спасибӑ калӑр.

Сире, Ҫеҫҫи ӗҫлесе пӗтернӗ хыҫҫӑн, пирӗн пата колхоза килме чӗнетпӗр. Есӗр килнӗ ҫӗре пирӗн колхоз ҫуракине пӗтӗмпех хатӗр пулмала тума сӑмах паратпӑр.

Колхоз активӗ партийе кӗрет

Харьков облӑҫӗнче суйлав кампанине активлӑ хутшӑнса ӗҫленӗ колхозниксем парти ретне тата, сочувствуйушчине кӗреҫҫӗ.

Близнецовск районӗнчи Софийевск йал. совет председательне Володькова йулташа Украинӑри К(б)П кандидатне илнӗ. Вӑл Лозовск округӗнчи суйлав комиҫҫи членӗ пулса ӗҫленӗ. Карл Маркс йачӗпе тӑракан йалхуҫалӑх ертелӗнчи парторганизаци агитатора—60 ҫулхи колхозник-стахановец Петес йулташа сочувствуйушчине илнӗ.

Пулашки вӑхӑтра облӑҫри пуҫламӗш парторганизацисене колхозниксем парти ретне тата сочувствуйушчине илме ыйтса 100 ытла зайавлени панӑ.

(ТАСС).

Чаплӑ йубилей умӗн

Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗ тата Тинӗс ҫар флочӗ 20 ҫул тултарасси ҫывхарса килет. Мускаври Фрунзе йачӗпе тӑракан Хӗрлӗ ҫар ҫурчӗ ҫак чаплӑ куна иртерме вӑйлӑн хатӗрленет. Асаилӳ каҫӗсем, каласусем, лекцисем туса иртереҫҫӗ. Февраљ уйӑхӗн пуҫламӗшӗнче Мускав гарнизонӗнчи боецсемпе командирсем тата политработниксем валђи оборонӑ фильмисене пӑхмали вунӑкунлӑх иртереҫҫӗ. Ҫав вунӑкун хушшинче чи лайӑх кинокартинӑсене кӑтартаҫҫӗ: „Ленин в Октябре“, „Волочаевские дни“, „Мы из Кронштадта“, „Чапаев“, „На дальнем Востоке“, „Депутат Балтики“ тата ыттисене те.

Ҫавӑн пекех тата оборонӑ музыки вунӑкунлӑхне иртереҫҫӗ.

(ТАСС).

20.862 пин центнер сахӑр тунӑ

Кӑҫал сахӑр кӑшманӗ питӗ вӑйлӑ пулчӗ. Ҫавӑнпа пирӗн сахӑр заводӗсем пит нумай сахӑр туса кӑлараҫҫӗ. Сахӑр пӗҫермелли сезон пӗтмен-ха, ҫавах йанварӗн 10-мӗшӗ тӗлне 20 мӗлйун та 862 пин центнер сахӑр туса кӑларнӑ. Вӑл иртнӗ 1926—27 ҫулхи сезонра ҫав вӑхӑт тӗлне туса кӑларнинчен 3 мӗлйун ҫурӑ центнер ытларах пулат̆.

(ТАСС).

Колхозӑн 12 автомашинӑ

ОРЕНБУРГ, 14-I (ТАСС). Ҫурҫултаӑк хушшинче потребител кооперацийӗ Оренбург облӑҫне груз турттармалли автомашинӑсем 1.060 кӳрсе пынӑ. Ҫав автомашинӑсенчен 755 машинине колхозсем туйаннӑ. Кваркенский районӗнчи „Красный Урал“ колхозӑн халӗ ӗнтӗ 12 автомашинӑ пур.

Республикӑлӑ Испанине пулӑшаҫҫӗ

Швецири „Социалдемократен“ хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Швецири пӗтӗмӗшлӗ ӗҫ пӗрлешӳвӗ республикӑлӑ Испанине „Бургундия“ йатлӑ пароход йанӑ. Вӑл пароход ҫинче республикӑлӑ Испани валђи ҫимӗҫсем тийесе кайнӑ. Ҫимӗҫсене туйанма пӗтӗмӗшлӗ ӗҫ пӗрлешӳвӗ 135 пин швеци кронӗ укҫа панӑ.

Парижра „Французская народная помощь“ йатлӑ организаци республикӑлӑ Испани валђи 30 грузовой автомобил ҫимӗҫсемпе тумтирсем йама укҫа пуҫтарма тытӑннӑ.

(ТАСС).

Германире ӗҫсӗрлӗх ӳсе пырат̆

Берлинран пӗлтернӗ тӑрӑх, Германире безработицӑ ӳсех пырат̆. 1937 ҫулхи декабӗр уйӑхӗнче безработнӑйсен хисепӗ 422 пин ҫын хушӑннӑ.

(ТАСС).

В. И. Ленин вилни 14 ҫул тултарас умӗн

Шупашкарти М. Горький йачӗпе тӑракан Тӗп библиотекӑ В. И. Ленинӑн ӗҫӗсемпе пурнӑҫне кӑтартса паракан икӗ витринӑ туса хатӗрленӗ. Вуламалли залра Маркс, Енгељс, Ленин тата Сталин произведенийӗсен витринине тунӑ. Стенасем ҫине Ленинпа Сталинӑн Октӑбӗр революци вӑхӑтӗнчи паттӑр ӗҫӗсене кӑтартакан портретсемпе картинӑсене ҫакаҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех Ленин произведенийӗсене килле илсе кайса вулакансен шучӗ те чылай ӳсрӗ. Кунта Ленин произведенийӗсен спискине туса ҫакнӑ.

С. Воробйов.

Подписчике хисеплемеле

„Мӗнрен тытӑнмала?“ йатлӑ статйара В. И. Ленин пичет пирки ҫапла ҫырнӑ: „... хаҫат ӗҫӗ пӗр идейӑсем сарнипех, пӗр политикӑла воспитани панипе тата политикӑла союзниксем хутшӑнтарнипех чарӑнса тӑмаст̆. Хаҫат вӑл коллективлӑ пропагандиспа коллективлӑ агитатор кӑна мар, вӑл ҫавӑн пекех тата коллективлӑ организатор та“. Ӗҫҫыннисен културлӑхӗпе политикӑла пӗлӳвӗ хӑпарса пыни—вӑл массӑ хушшинче хаҫат-журнал сарассипе нихӑҫанхинчен те лайӑхрах ӗҫлеме хушат̆. Болђшевикла хаҫат—совет ҫыннине чи кирлисенчен пӗри. Ҫакна почтӑ ӗҫӗнчи работниксенчен чылайӑшӗсем ӑнланса илнӗ, вӗсем 1938 ҫулшӑн массӑ хушшинче хаҫат-журнал сарассипе ӗҫлесе, лайӑх тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ.

Уравӑшри (Вӑрнар р-нӗ) почтӑ уйрӑмӗн начаљникӗ Йегоров йулташ партипе совет организацийӗсемпе таччӑн ҫыхӑнса ӗҫлесе, 1938 ҫулшӑн хаҫат-журнал сарас задачӑна аван пурнӑҫласа пырат̆. Ҫак почтӑ уйрӑмӗпе ҫыхӑннӑ йалсене кӑҫал тӗрлӗ хаҫат-журналсем 15 пин тенкӗлӗх ытла сарнӑ. „Чӑваш Коммунӗ“, „Красная Чувашия“ тата „Ҫамрӑк болђшевик“ хаҫатсене сарас плана ытлашшипех тултарнӑ.

Ҫавӑн пекех Хӗрлӗ Чутай районӗнчи Сталин йачӗпе тӑракан колхозри почтаљйон Магазинов йулташ та йалти кашни хуҫалӑхах хаҫат-журнал ҫырӑнтарнӑ. Болђшевикла пичете халӑх хушшине сарас ӗҫӗн пахалӑхне ӑнланса илсе, ҫак йенӗпе лайӑх тӗслӗхсем кӑтартнӑ почтаљйонсем вуншарӑн шутланаҫҫӗ. Анчах ҫав хушӑрах, ку ӗҫе хакламан почтаљйонсем те пур-ха. Трак районӗнчи Карайри почтаљйон М. Малинин хаҫат-журнал сарассипе вуҫех те ӗҫлемест. Ҫырӑннӑ хаҫат-журналсене вӑл подписчиксем патне 9—10 кун хушшинче тин ҫитерет, тепӗр чух хӑшпӗр номӗрсене пачах ҫухатат̆. Час-часах вӑл йал хушшинче ӳсӗр ҫӳрет. Ҫавӑн пек ӗҫленипе ӗнтӗ кунта 500 хуҫалӑхран хаҫат-журналсем 160-шӗ кӑна ҫырӑнса илнӗ. Уйрӑм ҫынсем иртнӗ ҫулта октӑбӗр уйӑхӗшӗн ҫырӑннӑ „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫата 1938 ҫулхи йанвар уйӑхӗнче ҫеҫ илме тытӑннӑ.

Кушкӑри (Трак р.) почтӑ уйрӑмӗн начаљникӗ Филиппов Карайри туллимар вӑтам шкулти преподавателсемпе вӗренекенсене „Красная Чувашия“, „Чӑваш коммунӗ“ тата „Пионер сасси“ хаҫатсене йӗркелӗ парса тӑмаст̆, хӑшпӗр номӗрсене вуҫех те памаст̆. Ҫавӑн пекех „Смычка“ (Вӑрмар р.) колхозри М. Николайев почтаљйон хаҫат-журнал сарассипе ӗҫлемест, ҫырӑннӑ хаҫатсене подписчиксем патне вӑхӑтра ҫитермест тата ҫырусем ҫумӗнчи маркӑсене хӑйпӑтса, хӑйне валђи илсе йулат̆.

Кунашкал йӗркесӗрлӗхе пӗтермеле. Массӑ хушшинче хаҫат-журнал сарас задачӑна ӑнланса илме вӑхӑт ӗнтӗ. Лайӑх ӗҫлекен почтаљйонсен малтанхи кунсенче тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе, болђшевикла пичете ӗҫҫыннисем патне вӑхӑтра ҫитерессишӗн тата лайӑхрах ӗҫлемеле. Кашни колхозник, йединоличник киле хаҫат-журналлӑ пултӑр.

Колхоз театрӗ колхозра

ҪӖРПӲ. Йанварӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа Сӗнтӗрвӑрринчи пӗрремӗш колхоз театрӗн артисӗсем Ҫӗрпӳ районӗнчи колхозсене тухса „Лукийан кум“, „Пограничниксем“ пйессӑсене лартса тата тӗрлӗрен йурӑсем йурласа пачӗҫ. Театр Ҫӗрпӳ хулинче, Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителствин 2-мӗш участкинче, Хурӑнсурти чӑпта ҫапакан ертелте, „Ӗмӗт“, „Пионер“, Буденный йачӗпе тӑракан тата ытти колхозсенче те пулчӗ.

Ал. Садыков.

Стена хаҫачӗ пулӑшрӗ

Карай йалсовечӗ (Трак р.) ҫумӗнче тухса тӑракан „Ударник“ стена хаҫачӗ ҫинче 1937 ҫулти нойабӗр уйӑхӗнче „Хӗрлӗ Хӗвелтухӑҫ“ колхоз счетовочӗ Баранов Иван ҫинчен „Выљӑх тухтӑрӗ“ йатлӑ заметкӑ тухрӗ. Заметкӑра ҫапла ҫырнӑччӗ: „Карайри „Хӗрлӗ Хӗвелтухӑҫ“ колхоз счетовочӗ Баранов Иван Федорович 1937 ҫулти сентӑбӗрӗн йулашки кунӗсенче колхозӑн Хӗрлӗ ҫар фондӗнче тӑракан „Ангара“ йатлӑ кӗсрене йурийех, колхоз пурнӑҫне кайала йарасшӑн, емел вырӑнне формалин растворӗ ӗҫтерсе вӗлерме шутланӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн кӗсре чутах вилсе кайман, пӗр уйӑх хушши чирлесе выртса пурӑнчӗ. Баранов—колхоз тӑшманӗ, ӑна халех суд аллине памала“.

Заметкӑ тӑрӑх ӗҫе тӗплӗн тӗрӗслесе пӑхсан, заметкӑри факт тӗрӗсех пулчӗ. Баранов колхозӑн Хӗрлӗ Ҫар фондӗнче тӑракан кӗсрине формалин растворӗ парса вӗлерессшӗн пулнӑ, колхоз хуҫалӑхне, пурлӑхне сӑтӑрласа колхоза хавшатассшӑн пулнӑ вӑл.

Баранова колхоз счетоводне колхозниксем лартман, вӑл хӑй ирӗкӗпе кӗрсе ларнӑ. Счетовода кӗрсе ларичченех малтан тӗрмерен ҫеҫ тухса килнӗ пулнӑ. 1933 ҫулта ӑна совет саккунӗсене пӑсса ӗҫленӗшӗн, суд туса тӗрмене хупмала тунӑ. Унӑн пичӗшӗсем те колхоз пурлӑхне ҫаратнӑшӑн халђ те тӗрмере лараҫҫӗ.

Баранов колхозри учот ӗҫне пӗтӗмпех йапӑхтарса йанӑ. Колхоз хуҫалӑхне сӑтӑрлас шутпа ӗҫленӗшӗн ӑна халђ счетоводран кӑларса суда памала тунӑ.

И. Петров.

Шахмӑтпа шашкӑ йухӑмне—массӑ хушшине

Шахмӑтпа шашкӑ ӗҫхалӑхӗн йуратнӑ вӑййи пулса тӑни пирӗн Чӑваш республикӗнче те аван курӑнат̆. Хаҫатсем ҫинче епӗр час-часах шахмӑтпа шашкӑ турнирӗсем пула-пула иртни ҫинчен, кружоксем уҫни ҫинчен вулатпӑр.

Анчах ҫак йухӑм пирӗн колхозсемпе шкулсенче, йалсемпе хуласенче хӑйне тӗллӗн, никам йертсе пымасӑр, учотсӑр-мӗнсӗр пулса пырат̆.

Шахмӑтпа шашкӑ йухӑмне йертсе пыман пиркийех ӗнтӗ пирӗн республикӑра квалификацилӗ шахматиссемпе шашиссем ҫукпа пӗрех. Республикӑн шахмӑт чемпионӗ Студенецкий йулташ та II мӗш категорире ҫеҫ тӑрат̆, шашкӑпа республикӑри чемпион йатне илнӗ Кириллов йулташ—III-мӗш категорире. Пӗтӗм республикӑ тӑрӑх илсен категорилӗ шахматиссемпе шашиссен хисепӗ ҫакӑн пек:

Шахмӑтпа: I-мӗш категори йышӑннисем ҫук, II-мӗш категори—2, III-мӗш категори—9, IV-мӗш категори—46 ҫын.

Шашкӑпа: I-мӗшпе II-мӗш категори вуҫех ҫук, III-мӗш категори—3 ҫын, IV категори 21 ҫын. Шахмӑтпа шашкӑ пӗрле V-мӗш категори йышӑннисем 457 ҫын.

Ҫак хисепсем ҫумне пӗр сӑмах хушмасан та ӗҫсем йепле пыни, уҫӑмлӑн курӑнса тӑрат̆.

Ку таринччен Чӑваш республикӗнчи шахматиссемпе шашиссен турнирӗсем 5 хут пулса иртнӗ. Ҫав турнирсене пысӑк хуласенчен чӗнсе илнӗ маҫтӑрсем выљанипе пирӗн шахматиссене танлаштарсан, вӗсен шахмӑтпа шашкӑ маҫтӑрлӑхӗ кайра тӑни палӑрат̆. Акӑ илер пӗлтӗрхи турнирех. Унта Горький хулинчи автозаводран килнӗ Власов йулташа шашкӑпа ҫӗнтерекен пӗрре те тӗл пулмарӗ; пӗртен-пӗр Хохлов ҫеҫ ӑна парӑнмасӑр партине ҫурмала турӗ.

Республикӑра кӑҫалхи турнир март уйӑхӗнче пулса иртмеле. Кӑҫалхи турнир, паллах, ытти ҫулхисенчен сарлакарах, интереслӗрех иртессе епӗр шансӑх тӑратпӑр. Турнира пур районсен те халех хатӗрленме тытӑнмала. Иртнӗ ҫулсенчи турнирсенче пилӗк-ултӑ районран ытлах пухӑнман пулсан, кӑҫалхи турнира хутшӑнман район пулмала мар.

Шахмӑтпа шашкӑ йухӑмӗ хӑйне тӗллӗн пыни ҫинчен епӗр ҫӳлте асӑннӑччӗ. Анчах камӑн йертсе пымала-ха ку ӗҫе?

Пирӗн вӑл ӗҫе аталантарса йама условисем ҫук мар. Кашни районрах, кашни колхозрах културӑ ҫурчӗсем пур. Республикӑ столицинче Халӑх пултарулӑх ҫурчӗ те пур. Ҫигменнине тата, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫумӗнчи физкултурӑпа спорт ӗҫӗсен комитечӗ те пур (председателӗ Йенчиков йулташ).

Анчах ҫав учреждениесем ку таринччен шахмӑтпа шашкӑ ҫине ҫийелтен пӑхни куҫа кӗретӗнех палӑрса тӑрат̆. Ахаљтен мар ӗнтӗ колхозсенче, заводсенче, шкулсенче уҫӑлакан шахмӑтпа шашкӑ кружокӗсем, вӗсем ҫине никам та ҫаврӑнса пӑхман пирки, пулӑшу паман пирки, нумайа пымасӑрах сӳне-сӳне лараҫҫӗ.

Йулашкинчен, литературӑ пирки асӑнса хӑварас пулат̆. Ку тарана ҫитсе те шахмӑтпа шашкӑ вӑййисене чӑваш чӗлхипе вӗрентекен кӗнекесем ҫукки йӗркелӗ йапала мар. Ку тӗлӗшпе Чӑвашиздат та нимӗн те туман. Чӑвашиздатра виҫҫӗмӗш ҫул ӗнтӗ вырӑсларан куҫарнӑ шахмӑт кӗнекине кӑларма хатӗрленеҫҫӗ. Анчах, халӗ те паллӑ мар: те тухат̆ вӑл 1938 ҫулта, те ҫук. Шашкӑ пирки кӗнеке кӑларасси Чӑвашиздат планне те кӗреймен. А йалсенчи ҫамрӑксем ҫак културӑлӑ вӑйӑсене теплерех вӗренесшӗн ҫунаҫҫӗ, вӗсене ҫӑмӑл чӗлхепе ӑнлантарса паракан кӗнекесем кирлӗ.

Пирӗн республикӑри хаҫатсем шахмӑтпа шашкӑ ыйтӑвӗсене ҫутатса тӑмаҫҫӗ. „Красная Чувашия“ хаҫат ҫеҫ хутран-ситрен кӗске хыпарсем пичетлекелет. „Чӑваш Коммунӗ“, „Ҫамрӑк болђшевик“, „Пионер сасси“ хаҫатсем пачах та ҫырмаҫҫӗ тесе калас пулат̆.

Малашне шахмӑтпа шашкӑ вӑййине хакламанни пулмала мар. Ӑна пур майсемпе те чӗртсе йарса, массӑ хушшине кӗме анлӑ та такӑр ҫул уҫса парас пулат̆.

Мих. Ижейев.

Начар ӗҫлекен вулав ҫурчӗ

Иккӗмӗш ҫул ҫине кайрӗ ӗнтӗ Пысӑк Чӑрашра (Ҫӗрпӳ р-нӗ) вулав ҫурчӗ уҫни. Анчах вулав ҫурчӗн пуҫлӑхӗ М. Василйев хӑйӗн ӗҫӗпе интереслемест. Вулав ҫуртӗнче кӗнекесем, хаҫат-журналсем ҫителӗксӗр. Пуррисем те шкап ҫук пирки, ӑҫта кирлӗ унта сапаланса выртаҫҫӗ. Йалсовет иртнӗ ҫулта ҫӗнӗ кӗнекесем илме тесе 400 тенкӗ укҫа уйӑрнӑ пулнӑ. Вӑл укҫана та йалсовет председателӗ Орешкин вулав ҫуртне кӗнекесем илме паман. Вулав ҫуртне радио кӗртмен, шашкӑ-шахмӑт, домино т. ыт. вӑйӑ хатӗрӗсем те ҫук. Ҫавӑнпа та вулав ҫуртне колхозниксемпе йединоличниксем пымаҫҫӗ те. Каҫхине 10—12 ҫулхи ачасем кӑна пухӑнаҫҫӗ. Вулав ҫурчӗ ҫумӗнче стена хаҫачӗ тухмаст̆, нимӗнле кружок та ӗҫлемест.

П. Павлов.

Цирк артисӗсем гастроле тухса кайаҫҫӗ

Чӑвашсен государствӑ филармонийӗ ҫумӗнче организациленӗ естрадӑ пайӗн артисӗсем пайан, йанварӗн 16-мӗшӗнче, районсене гастроле тухса кайаҫҫӗ. Артиссен бригадине Н. В. Румйанцев администратор йертсе пырат̆. Вӗсем Канаш, Патӑрйел тата Йӗпреҫ районӗсенче пулса, район центрӗсемпе колхозсенче цирк номӗрӗсемпе постановкӑсем параҫҫӗ.

Цирк артисӗсен гастролӗ февралӗн 16-мӗшчен пырат̆.

ТЕМТЕПӖР

Российӑра хаҫат тухма пуҫлани

1703 ҫулхи йанварӗн 2 (13)-мӗшӗнче, 235 ҫул кайарах, Петр I патшан указӗ тӑрӑх Российӑра пирвайхи хаҫат тухнӑ.

Малтанхи хаҫат: „Ведомости о военных и иных делах, достойных знания и памяти, случившихся в Московском государстве, и во иных окрестных странах“ йатлӑ пулнӑ.

1710 ҫулччен хаҫат Мускавра тухса тӑнӑ, 1710 ҫулхи октӑбӗрӗн 29-мӗшӗнче ӑна Петербурга куҫарнӑ.

„Ведомости“ хаҫатра чи нумай ӗҫлекен сотрудниксенчен пӗри Петр хӑй пулнӑ,—вӑл корректурӑ тӳрлетнӗ, хаҫатра хӑйӗн ҫырӑвӗсене пичетленӗ, йутҫӗршывсенче тухакан хаҫатсенчен мӗн куҫарса ҫырмаллисене паллӑ тунӑ.

Петр I тунӑ пур ҫӗнӗ йапаласене те кӑмӑлламан бойарсем, хаҫат кӑларас ӗҫ ҫине те сиввӗн пӑхнӑ, ҫавӑнпа вӑл ҫулран ҫул сахалтарах тухса пынӑ, Петр вилсен тухма та чарӑннӑ.

(„Красная Татария“).

Пружинӑсӑр патефон

Ленинградри суту-илӳ портӗнче ӗҫлекен техник-рационализатор И. Наумов йулташ искусствӑ ӗҫӗсен комитетне хӑй тунӑ пружинӑсӑр патефон чертожӗсене тӑратнӑ. Вӑл патефонӑн пластинкӑсем выртакан дискне пӗчӗк гиркӑ ҫавӑрат̆.

Ҫак патефонпа пӗр чарӑнмасӑр 8 пластинкӑ итлеме пулат̆. Патефон пластинкисене ҫавӑрса лартма тунӑ мел оперӑсен пысӑк пайӗсене, калавсене тата докладсене пӗр майах итлеме май парат̆.

Пружинӑсӑр ӗҫлекен патефона тӑвасси изобретателӗ 70 тенке ларнӑ.

(„Горьковский рабочий“).

Сайра пулакан операци

Нумайах пулмаст̆ Одессӑри 3-мӗш совбољницӑн клиникине йӑвӑр чирленӗ Ф. Ваљдман рабочи арӑмне илсе пынӑ. Унчен вунӑ кун маларах унӑн ҫӳлти шӑлне кӑларнӑ. Ҫак операцийе тунӑ чух сывласа йанипе шӑлӗ шалала кӗрсе кайса ӳпкене лекнӗ. Ҫав чирлӗ шӑлне пула унӑн ӳпки пӑсӑлма пуҫланӑ тата плеврит пуҫланнӑ. Клиникӑра Розенблат профессорпа Липкин доктор ӑна операци туса шӑлне ӳпкинчен кӑларнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Ваљдман часах сывалса ҫитсе боњницӑран тухнӑ.

(„Черноморская коммуна“).

КӖСКЕН

* Чурпайри (Йетӗрне р-нӗ) пушарпа кӗрешекен дружинӑн кӑҫалччен пушар хатӗрӗсене усрамалли Сарай пулман. Ҫак кунсенче йалсовечӗ тӑрӑшнипе вӑл сарайа тума тытӑнчӗҫ.

* Балдай йалпоӗн (Йетӗрне р-нӗ) Урапакассинчи уйрӑмӗн магазинӗ 1937 ҫулхи товар ҫавӑрнӑш планне ытлашшипех тултарчӗ. Магазина колхозниксемпе йединоличниксене кирлӗ таварсене вӑхӑтра кӳрсе килеҫҫӗ, таварсене таса тытаҫҫӗ. Ку ӗҫре магазин директорӗ М. Чебаторов йулташ тӑрӑшса ӗҫлет.

В. Лазарев.

ҪӖРПӲ. Патӑрйелӗнчи пуштӑ агентстви хаҫат-журнал сарассипе районра пӗрремӗш вырӑн йышӑнат̆. План тӑрӑх 1938 ҫулшӑн 7387 тенкӗлӗх тӗрлӗ хаҫат-журнал сармала пулнӑ пулсан, агенствӑ вӑл плана ытлашшипех тултарчӗ, пӗтӗмпе 7390 тенкӗлӗх сарчӗ.

Хаҫат-журнал сарас ӗҫре Илйин, Колђцов почтаљйонсем аван ӗҫлереҫ.

Д. А.

Шупашкарти телеграфри чунсӑр ҫынсем ҫинчен

Редакци ӗнер телеграфпа „Правда“ хаҫатӑн 15-мӗшӗнче тухнӑ номӗрӗнчи умстатйине илчӗ. Шупашкарти телеграф кантурӗнче чунсӑр йе тӑшманла ҫынсем ӗҫленӗ пирки, умстатйа Аслӑ Совет ҫинчен елеклекен статйа пулса тухнӑ. Машинисткӑ йӑнӑш пичетлесе пани ҫеҫ мар кунта. Пичетленӗ хыҫҫӑн пӑхса тухакансен куҫӗ те „витӗрех“ пулман пулас.

Кун пек ӗҫсем Шупашкарти телеграф кантурӗнче пӗрре ҫеҫ пулман. Сӑмах сиктерсе хӑварни, сӑмаха хуҫкаласа тӑкса урӑхлатса хуни, ҫапла майпа телеграфпа паракан йапалан шухӑшне пӑсса пӗтерни час-часах пулкалат̆.

Кун пек ирсӗр ӗҫсем туса пыракансене ответ тыттарма тахҫанах вӑхӑт ӗнтӗ.

Йӗлтӗрлӗ поход

Ҫӗрпӳри фељдшер шкулӗпе Шупашкарти акушеркӑсем хатӗрлекен шкул кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансанах пӗр-пӗрин хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑрту договорӗ ҫирӗплетнӗ.

Ӑмӑрту договорӗ мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынине тӗрӗслеме фељдшер шкулӗнчи студентсем йанварӗн 10-мӗшӗнче йӗлтӗрлӗ поход организацилесе, Ҫӗрпӳрен Шупашкара килчӗҫ. Похода пӗтӗмпе 10 комсомолец отличник хутшӑннӑ.

А. Лапшин.

Вӑрнарта ачасен санаторийӗ ӗҫлеме пуҫларӗ

1937 ҫулхи декабӗр уйӑхӗнче, Вӑрнарти канмалли ҫурт пулнӑ вырӑнта, ачасен санаторийӗ ӗҫлеме пуҫларӗ. Кунта шӑмӑ туберкуљозӗпе чирленисене сыватаҫҫӗ. Санаторин хӑйӗн електростанци ӗҫлет. Малашне рентген кабинечӗ те пулмала.

Д. Обофоров.

Колхоз председателӗн ҫырӑвӗ

„Чӑваш Коммунӗ“ хаҫатӑн 5 (4818)-мӗш № че пирӗн „Комбайн“ колхоз (Елӗк рай.) вӑрманта ӗҫлемени ҫинчен ҫырнӑ С. Йаковлев заметки ҫапӑнса тухнӑччӗ. Анчах ку тӗрӗс мар. Пирӗн колхозӑн пӗтӗмпе 505 кубла метр вӑрман хатӗрлемеле. Вӑл шутран 137 кбм касса хатӗрленӗ те ӗнтӗ. Йулашки йулнине ҫак кунсенчех пурнӑҫлатпӑр.

Актайри „Комбайн“ колхоз председателӗ

Е. Филиппов.

Тӳрлетни

„Чӑваш Коммунӗн“ кӑҫалхи 7-мӗш номӗрӗнче 2-мӗш страницинче „Тӑшмансене партире вырӑн ҫук“ йатлӑ статйан 4 мӗш абзацӗн пуҫламӗшне ҫапла тӳрлетсе вуламала: „Кам пулнӑ-ха ҫав Йетрухин? Вӑл патша ҫарӗнче офицер пулнӑскер, 1918 ҫулта“...

„Чӑваш Коммунӗн“ 1937 ҫулти декебӗрӗн 5-мӗшӗнче тухнӑ номӗрти ӳмстатйара йӑнӑш кайнӑ. Ҫавӑнпа 6-мӗш абзацӑн 3-мӗш йуплевне ҫапла тӳрлетсе вуламала: „Совет Союзӗн политикӑлӑ никӗсӗ—ӗҫҫынни депутачӗсен Совечӗсем“

Ответлӑ редактор заместителӗ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

ЧӐВАШПРОМСОЙУЗ

1938 ҫ. йанварӗн 1-мӗшӗпе апрелӗн 1-шӗ хушшинче

Тӗрлӗрен кӗпе-тумтирсемпе йапаласене илемлӗ тӗрӗсемпе тӗрлемелли

ӐМӐРТУ ТУСА ИРТЕРЕТ

1. Хӗрарӑм платйи
2. Хӗрарӑм блузки
3. Ача платйи
4. Сӗтел ҫивти 140×140 тата 140×180
5. Ҫытар пичӗ
6. Арҫын кӗпи
7. Алшӑли
8. Занавескӑ
9. Пӳлӗме кармали
10. Лампӑ ҫине абажур
11. Стена ҫумне ҫакмалли (панно)
12. Чейник ҫине витмели

Чи лайӑх илемлӗ тӗрӗсем тӗрлекенсене пулӑшас тӗлӗшпе ҫакнашкал премисем пама палӑртнӑ:

Пӗрремӗш преми— 500 тенкӗ—пӗрре
Иккӗмӗш преми— 300-шер тенкӗ—виҫҫӗ
Виҫҫӗмӗш преми— 200-шер тенкӗ—иккӗ
Тӑваттӑмӗш преми— 175-шер тенкӗ—тӑваттӑ
Пилӗкӗмӗш преми— 100-шер тенкӗ—вуннӑ

Ӑмӑрту тӑрӑх тӗрлесе хатӗрленӗ йапаласене ҫуса йакатнӑ хыҫҫӑн тин комиҫҫи пӑхса йышӑнат̆. Йапала ҫумӗнче тӗрлекен ҫынӑн йачӗпе хушамачӗ, адрӗсӗ уйрӑм хут йе пир татӑкӗ ҫинче пулмала.

Тӗрлесе хатӗрленӗ йапаласене „Чӑваш тӗрри“ базинче йышӑнаҫҫӗ. Шупашкар, М. Горький урамӗ, 24-мӗш № ҫурт.

Материалсене ӑмӑртӑва тӑратмалли срук кӑҫалхи мартӑн 25-мӗшӗнче.

Тӗрӗ тӗрлемелли материалсене „Чӑваш тӗрри“ бази парат̆. Тӗрӗ тӗрлеме пултаракансене пурне те Чӑвашпромсойуз ӑмӑртӑва хутшӑнма чӗнет.

„Чавашпромсойуз“

— АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ —

Йанварӗн 16-мӗшӗнче ВЫРӐСЛА СПЕКТАКЉ

А. Н. Островский

„Без вины виноватые“

(4 пайлӑ комеди)

Режиҫҫор С. С. Мартагин лартат̆

Талон № 83. Абонемент № 9, талон № 6

АНОНС! Шекспир

„ОТЕЛЛО“

ЛАРТМА ХАТӖРЛЕНЕҪҪӖ.

Билетсене малтанах илсе хума пулат̆. Коллективлӑн илсен билетсем йӳнӗрех).

Чӑвашплемзаготконторӑна 2 бухгалтер, 2 счетовод КИРЛӖ.

Ӗҫукҫи килӗшӳ тӑрӑх.

Ҫак адреспа пымала: Чӑваш АССР, Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, Чӑвашплемзаготконтора, телефон № 0—57.

Чӑваш АССР Осоавиахим Тӗп Совечӗ

ЙАЛАН ӖҪЛЕМЕ КИРЛӖ:

1. Аслӑ бухгалтер
2. Бухгалтер
3. Бухгалтер-ревизор.

Ҫак адреспа пымала: Осоавиахим Тӗп Совечӗ, Плеханов урамӗ, 31. Телефон 1—82. Ӗҫукҫи килӗшӳ тӑрӑх.

Осоавиахим Тӗп Совечӗ.

„Чӑваш коммунӗ“ ҫырӑнса илмелли хаксем; 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 5 пус, 1 уйӑха—2 т. 50 пус. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 28. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чуваш полиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 см. 1—1 п. л.